Ку... библиотека
им. М. Горького
№

ПĔТЕМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
12
ВЫРСАРНИКУН
№ 74 (8983)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ (1 стр.).

Совет Союзĕпе Албани хушшинчи суту-илӳ çинчен (1 стр.).

Чăваш республикинчи колхозниксен, колхозницăсен, МТС-сенче ĕçлекенсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен социализмла обязательствисем (1—2 стр.).

ПУÇЛАМĂШ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕН ĔÇ ОПЫТĔНЧЕН: С. Галкин. — Амăртăва ертсе пырасси (2 стр.).

Т. Егорова. — Вăрлăха яровизацилесе акмалла (2 стр.).

П. Николаев.—Вырăнти ресурссемпе лайăхрах усă курмалла (3 стр.).

Н. Владимиров.—Вырăс халăхĕн аслă драматургĕ-патриочĕ. А. Н. Островский çуралнăранпа 130 çул çитнĕ май (3 стр.).

Н. Иванов.—Шкул директорĕ тата педагогсен коллективĕ (3 стр.).

Корея ыйтăвĕ. «Правда» хаçатăн апрелĕн 11-мĕшĕнчи умстатьи (4 стр.).

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ (4 стр.).

Паньмыньчжонри калаçусем (4 стр.).

Ĕççыннисен çырăвĕсем

Учрежденисемпе тĕрлĕ организацисем тата хаçатсен редакцийĕсем кашни кунах ĕççыннисенчен çырусем нумай илеççĕ. Çыру авторĕсем уйрăм работниксемпе руководительсен тата организацисен ĕçри çитменлĕхĕсене хăюллăн критиклеççĕ, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачăççĕ. Совет çыннисем учрежденисемпе организацисен ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешессине хăйсен патриотла тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Вĕсем пирĕн предприятисен, учрежденисен, колхозсен ĕçĕ коммунизм строительстви задачисен çӳлĕшĕнче пултăр тесе тăрăшаççĕ.

Пирĕн ĕççыннисем çитменлĕхсене критиклени тата вĕсене пĕтерес ĕçе хастарлă хутшăнни вăл совет стройĕ чăннипех демократиллĕ строй пулнине, совет çыннисен ăнланăвĕ ӳссе пынине пĕлтерет. Рабочисемпе служащисем çитменлĕхсем пирки вăхăтра аса илтерсе тăни, аялтан килекен критика вăйланса пыни пирĕн халăх массисем хăйсене хăйсем çĕршывăн чăн-чăн хуçисем тесе шутланине кăтартать.

Парти, совет, хуçалăх тата профсоюз организацийĕсем ĕççыннисенчен çырусем нумай илсе тăни аялтан килекен критика аталанса пынине кăтартса парать. Самокритикăна тата аялтан килекен критикăна пур майсемпе те аталантарса пырсан кăна эпир коммунизмшăн кĕрешнĕ çĕрте тĕл пулакан чăрмавсене çĕнтерме пултаратпăр.

Ĕççыннисен çырăвĕсем ĕççыннисемпе учрежденисем тата организацисем хушшинчи çыхăнăва вăйлатма пулăшаççĕ. Ленин—Сталин партийĕ халăхпа çыхăну тытассине яланах пысăк вырăна хунă. **«Пирĕн партин вăйĕпе никам çĕнтерейми хăвачĕ — халăх массисемпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнинче»,** тесе калать Г. М. Маленков юлташ. Халăх массисемпе учрежденисем тата организацисем хушшинчи çыхăну ытларах вăйланса пытăр тесе, ĕççыннисен çырăвĕсем çине пур çĕрте те тимлĕн пăхмалла.

Ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене вăхăтра пăхса тухни коммунизм строительствинче пысăк усă кӳнине нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, тивĕçлĕ органсене çырусем çырса, хăйсен колхозĕнче общественлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшрĕç. Калинино районĕнчи Шĕнер ял Совет исполкомĕн председателĕ Максимов тата секретарĕ Егоров киревсĕр ĕçсем тунă. Çакăн çинчен ĕççыннисем вăхăтра çырса пĕлтерни ĕççынни депутачĕсен Калинино район Совет исполкомне çиййĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнма, ял Совет исполкомĕн ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ. Вырăнти сигналсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнса, Шупашкар районĕнчи Кӳкеçри вăтам шкулти пысăк çитменлĕхсене пĕтернĕ, совет учительне тивĕçлĕ мар ĕçсем тунăшăн шкул директорне Ефимов юлташа асăрхаттарнă, вĕрентӳ пайĕн заведующине Афанасьев юлташа вырăнтан кăларнă.

Совет çыннисем ĕç çине çĕршывăн чăн-чăн хуçисем пек пăхаççĕ, ăçта та пулсан çитменлĕхсемпе йăнăшсем пурри палăрсан, вĕсене витĕмлĕ критиклеççĕ. Ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ вăхăтра уйрăм ял Совечĕсен çитменлĕхĕсем пирки çыракансем сахал мар пулчĕç. Критикăлла çырусемпе жалобăсене вăхăтра пăхса тухни, вĕсем тăрăх кирлĕ мерăсем йышăнни чылай йăнăшсемпе çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшрĕ.

Пирĕн çĕршывра рабочи е колхозник академикпа тата министрпа çыхăну тытасси, рабочи е колхозник çырăвĕнче хускатнă пысăк ыйтăва министерствăра, наука учрежденийĕсенче сӳтсе явасси тахçанах йăлана кĕнĕ. Ĕççыннисен çырăвĕсемпе сĕнĕвĕсене тимлĕ пăхни çитменлĕхсене вăхăтра уçса палăртма, общественлла усăллă ĕç тума, ӳсĕм тума пулăшать. Çакна шута илсе, кашни учрежденипе организацире çырусемпе жалобăсене вăхăтра пăхса тухма, вĕсенче хускатнă ыйтусене тĕплĕ шута илме тăрăшмалла.

Анчах та хăшпĕр организацисемпе учрежденисен руководителĕсем ĕççыннисен çырăвĕсене пăхса тухасси политикăлла пысăк ĕç пулнине ăнланмаççĕ, вĕсене питех те кая юлса пăхса тухаççĕ е çырăва кам çинчен çырнă, ун патнех «тĕрĕслеме» ярса параççĕ. Куславкка район Совет исполкомĕ сăмахран, Чашлама шкулĕнче ĕçлекенсен ушкăнĕ интернатри ачасем валли уйăрнă продуктсене салатса пĕтерни тата ытти çитменлĕхсем çинчен çырнă çырăва вунă уйăх çитсен çеç пăхса тухнă. РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Ефимов юлташ 1952 çулхи августăн 9-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Кивçурткассинчи Т. Илларионова юлташран илнĕ çырăва Чăваш АССР Финанс министерствинче пăхса тухма ярса панă. Финанс министерстви çак çырăва пăхса тухса ыйтăва татса париччен тăватă уйăха яхăн иртнĕ.

Ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕçе çавăн пекех Чăваш АССР Сутĕç министерствинче, Ишлей, Канаш, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ, Шупашкар, Вăрмар тата Етĕрне районĕсенчи совет, ялхуçалăх, финанс органĕсенче начар организациленĕ.

Учрежденисемпе организацисен руководителĕсем ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕçри ответлăха ӳстерни, вĕсене вăхăтра пăхса тухнине куллен асăрхаса тăни, çырусемпе жалобăсене кая юлса пăхса тухакан е вĕсене çухатакан уйрăм работниксене тивĕçлипе ответ тыттарни кирлĕ.

Партипе правительство пирĕн кадрсене совет çыннисен ыйтăвĕсене яланах тимлĕ пăхма вĕрентеççĕ. Çакна шута илсе, пĕр çырупа жалобăна та ахаль вырттарса хăвармалла мар. Кашни совет служащийĕ çакна асра тытма тивĕçлĕ: пирĕн ĕççыннисем государство аппарачĕн работникне совет влаçĕн представителĕ вырăнне, халăх тарçи вырăнне хурса хаклаççĕ, совет аппаратĕнче ĕçлекенсем хуть те мĕнле ыйтăва та тивĕçлипе татса парасса кĕтеççĕ.

Ĕççыннисен çырăвĕсемпе жалобисене пăхса тухас ĕçе лайăх йĕркелени учрежденисемпе организацисен ĕçне лайăхлатмалли мерăсенчен пĕри пулса тăрать. Партипе совет, хуçалăх тата ытти организацисен руководителĕсем çак ĕçпе куллен-кун интересленмелле, çырусемпе жалобăсене пăхса тухассине хăйсен тивĕçĕ вырăнне хумалла.

Ĕççыннисен çулпуçĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин халăх массисене вĕрентнипе пĕрлех вĕсенчен хăйсенчен те вĕренсе пымаллине яланах аса илтерсе тăнă. Çакă вăл пирĕн пур организацисемпе учрежденисене те ĕççыннисемпе çыхăну тытассине, çав шутрах ĕççыннисен çырăвĕсемпе ĕçлессине, лайăх йĕркелеме хушать. Пирĕн ĕççыннисем çитменлĕхсем çинчен тивĕçлĕ органсене пĕлтереççĕ. Совет патриочĕсем общественлăшăн сиенлĕ ĕç тăвакансене чăтса тăма пултараймаççĕ. Вĕсем уйрăм учрежденисемпе организацисем тата руководительсем тĕрĕс мар ĕçлени çинчен тивĕçлĕ органсене пĕлтерессине, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшассине хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ.

Ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерни, вĕсен çырăвĕсемпе жалобисене вăхăтра пăхса тухса тивĕçлĕ мерăсем йышăнни аялтан килекен критикăна ытларах вăйлатса пыма, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарас, коммунизм строительствинче çĕнĕ ӳсĕмсемшĕн кĕрешес ĕçре совет çыннисен активлăхне ӳстерме пулăшать.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн
УКАЗĔ
СССР ВĂРМАНПА ХУТ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МИНИСТРНЕ Г. М. ОРЛОВ ЮЛТАША ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

СССР Вăрманпа хут промышленность министрĕ Г. М. Орлов юлташ 50 çул тултарнă май, вăл вăрманпа хут промышленноçĕ енĕпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине палăртса, Георгий Михайлович Орлов юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ АЛБАНИ ХУШШИНЧИ СУТУ-ИЛӲ ÇИНЧЕН

СССР Шалти тата тулашри суту-илӳ министерствипе Албани суту-илӳ делегацийĕ хушшинче калаçусем ĕнерлĕ вĕçленнĕ. Кăçалхи апрелĕн 8-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Албани Халăх Республики пĕр-пĕрне 1953 çулта таварсем тăратасси çинчен килĕшӳ тунă.

Çак килĕшӳ тăрăх иккĕ çĕршыв хушшинчи суту-илӳ, 1952 çулхипе танлаштарсан, чылай ӳсмелле.

Совет Союзĕ Албание тырă, нефть промышленноçĕ валли тата строительство ĕçĕсене механизацилеме оборудовани, ялхуçалăх машинисем, удобрени, хура металсем тата тĕслĕ металсем, химикатсем тата ытти таварсем тăратать.

Албани Совет Союзне нефть, битум, пăхăр, тир-сăран, çăм, табак, цитрус çимĕçĕсем тата ытти таварсем тăратать.

Килĕшӳ çине Совет Союзĕ енчен — СССР Шалти тата тулашри суту-илӳ министрĕ А. И. Микоян, Албани енчен — Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ С. Колека алă пуснă.

Чăваш республикинчи колхозниксен, колхозницăсен, МТС-сенче ĕçлекенсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен

СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВИСЕМ

Партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе, И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕпе хавхаланса, совет çыннисем пилĕк çуллăх плана пурнăçа кĕртессишĕн вăйă шеллемесĕр кĕрешеççĕ, пирĕн çĕршыври коммунизм строительствин çĕнĕ çитĕнĕвĕсем патне шанчăклăн пыраççĕ.

Мухтавлă Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршыв промышленноçа, ялхуçалăхне тата культурăна аталантарас ĕçре калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕ. Пирĕн социализмла Тăван çĕршыв пĕтĕм тĕнчере мир, демократи тата социализм лагерьне ертсе пыракан вăй пулса тăчĕ.

Аслă Сталин пуçарнипе тата тӳрех вăл ертсе пынипе туса хунă колхоз стройĕ ялти ĕççыннисене эксплуатацие чухăнлăхран ĕмĕрлĕхех хăтарчĕ. Пирĕн çĕршыври социализмла ялхуçалăхĕ апат-çимĕç тата промышленность валли чĕртавар ытлашшипех туса илмелли тĕрĕс çул çине тăрать.

Социализмла промышленность ялхуçалăхне çултан-çул ытларах тракторсем, комбайнсем, молотилкăсем тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай парса тăрать. Ялхуçалăхне техникăпа ытларах хĕçпăшаллантарни, колхозсем пĕрлешсе пысăклани, квалификациллĕ пысăк опытлă кадрсем нумайлани пирĕн çĕршывра ялхуçалăхне малашне тата хăвăртрах вăйлатма лайăх условисем туса пачĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен пулăшса тăнипе, Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ социализмла обязательствăсене пурнăçласа пырса, Чăваш республикинчи нумай колхозсем 1952 çулта пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем туса илчĕç, общественлла выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерчĕç, выльăх-чĕрлĕхрен продуктсем ытларах илсе тăракан пулчĕç. Республикăри колхозсем государствăна тырă памалли плана, çĕрулми, махорка, тир, утă тата нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕ памалли плансене срокчен тултарчĕç.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Социализмла Ĕç Геройĕ И. Пронькин ертсе пыракан трактор бригадипе пĕрле ĕçлесе, иртнĕ çул кашни гектартан вăтам шутпа 33 центнер сурхи тулă туса илнĕ, П. Пупин ертсе пыракан уй-хир бригади—39,5 центнер илнĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа кашни гектартан: тĕштырăсем—20,5 центнер, кантăр вăрри—6,5 центнер, сӳс—7 центнер тата выльăх кăшманĕ 609 центнер туса илнĕ.

Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз уй-хирĕнче А. Михайлов ертсе пыракан трактор бригади ĕçленĕ, колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 20,5 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз гектартан 8 центнер йĕтĕн вăрри, 6 центнер сӳс туса илнĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз кашни гектартан 12 центнер кантăр вăрри, 10 центнер сӳс, 45 центнер вир туса илнĕ.

Чăваш республикинчи Государство селекци станцийĕнче кашни ĕнерен вăтам шутпа 4.110 килограмм сĕт суса илнĕ, кашни сысна аминчен 17 çура илнĕ. Çак станцири доярка О. Митрофанова хăй пăхакан 10 ĕнерен кашнинчен 4.705-шер килограмм, А. Ефимова доярка—4.200-шер килограмм сĕт суса илнĕ.

Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра 1952 çулта кашни ĕне пуçне 2.305 килограмм сĕт, пĕр сурăхран 4 килограмм та 650 грамм çăм илнĕ, кашни 100 сурăх пуçне 142 путек ӳстернĕ, А. Селиванова доярка иртнĕ çулта хăй пăхакан кашни ĕнерен 2.481 килограмм сĕт суса илнĕ.

Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозра сысна пăхакан Р. Шурбина кашни амаран 24 сывă çура илнĕ. Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозра чăх-чĕп пăхакан В. Григорьева çăмарта тăвакан кашни чăхран 86-шар марта илнĕ.

Малта пыракан колхозсен опычĕ çакна кăтартса парать: тырпул тухăçлăхне тата общественлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне малалла ӳстерсе пыма колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен пысăк майсем пур. Анчах çав майсемпе нумай колхозсемпе МТС-сем кирлĕ пек усă курмаççĕ. Республикăра малта пыракан колхозсен опычĕ начар саралать, унпа сахал усă кураççĕ-ха. Чылай ялхуçалăх артелĕсенче ĕç ресурсĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ, ĕçри дисциплина начар, çĕрĕсĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн культурине ӳстерме, техникăлла культурăсем ытларах акма, общественлла сурт-йĕрсем тума, артель хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене аталантарма çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. МТС-сен пуян техникипе кирлĕ пек усă курмаççĕ-ха, ялхуçалăх ĕçĕсене, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе механизацилес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та 1952 çулта йышăннă социализмла обязательствăра палăртнă чылай кирлĕ ĕçсене пурнăçламан.

Çак çитменлĕхсем пире малалла кайма чарса тăнине эпир ăнланатпăр, хамăр вăйпа пĕлĕве пĕтĕмпех çав çитменлĕхсене пĕтерме парăпăр. Эпир малашне те колхоз стройне мĕнпур майсемпе çирĕплетсе пырас тесе, пур колхозсем те чечекленсе çĕкленччĕр тесе ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕпĕр. Эпир ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна ăнăçлăн пурнăça кĕртме—пур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те чылаях ӳстерме, общественлла выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатса, çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕхрен продуктсем ытларах илсе тăма хамăрăн пĕтĕм вăя хурăпăр.

Чкаловски районĕнчи колхозниксем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем республикăри мĕнпур ялхуçалăх ĕçченĕсене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, общественлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе социализмла ăмăрту организацилеме чĕнсе каларĕç.

Çак чĕнĕве республикăри колхозсемпе МТС-сенче пуринче те хĕрӳллĕн ырласа йышăннă. Чкаловски районĕнчи ĕçченсен чĕнĕвне пухусенче сӳтсе явса, колхозниксем, МТС работникĕсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем социализмла ăмăртăва хутшăнчĕç, конкретлă обязательствăсем йышăнчĕç.

Калинино тата Елчĕк районĕнчи колхозсем кашни гектартан вăтам шутпа 17 центнер тĕштырă илме пулчĕç.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз, Социализмла Ĕç Геройĕ И. Пронькин ертсе пыракан трактор бригадипе пĕрле ĕçлесе, пĕрлешнĕ колхозăн сурхи тулă акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен гектар пуçне 28,4 центнер, ыраш акнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕнчен гектар пуçне 23,4 центнер тырă, йĕтĕн вăрри—6 центнер, клевер вăрри—4 центнер пухса кĕртме обязательство илчĕ. Колхозăн Кольцовка ялĕнчи бригадисем кашни гектартан 31,2 центнер сурхи тулă туса илме сăмах пачĕç.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, М. Тушков ертсе пыракан трактор бригадипе пĕрле ĕçлесе, кашни гектартан 24 центнер тĕштырă пухса кĕртме обязательство илчĕ, çав колхозри Михайловский бригади—26 центнер илме сăмах пачĕ.

Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз, А. Михайлов ертсе пыракан трактор бригадипе пĕрле ĕçлесе, кашни гектартан 23 центнер тĕштырă пухса кĕртме обязательство илчĕ, Н. Платоновпа В. Щукин бригадисем 24 центнертан кая мар илме сăмах пачĕç.

Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз, Григорьев ертсе пыракан трактор бригадипе пĕрле ĕçлесе, тĕштырăсем кашни гектартан 20 центнер, вăл шутран ыраш—25 центнер туса илме обязательство илчĕ.

Улатăр, Кувакино тата Пăрачкав районĕнчи колхозсем кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.500 килограмм сĕт суса илме обязательство йышăннă.

Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз кашни ĕнерен 2.800 килограмм сĕт суса илме, кашни çитĕннĕ сурăхран 5 килограмм çăм касса илме йышăннă. Çак колхозри доярка А. Селиванова кашни ĕнерен 3.000 килограмран кая мар сĕт суса илме сăмах пачĕ.

Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз кашни ĕнерен 2.000 килограмм сĕт суса илме, кашни çитĕннĕ сурăхран 3,5 килограмм çăм, çăмарта тăвакан кашни чăхран 80 çăмарта илме обязательство йышăннă. Çак колхозри доярка М. Маркина кашни ĕнерен 2.500 килограмм сĕт суса илме сăмах пачĕ.

Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз кашни ĕнерен 2.000 килограмм сĕт суса илме обязательство йышăнчĕ, çак колхозри доярка А. Каулина кашни ĕнерен 2.500 килограмм сĕт суса илме сăмах пачĕ.

Комсомольски районĕнчи «Красная звезда» колхозра сысна пăхакан Р. Шурбина хăйне пăхма панă кашни сысна аминчен 25 çурaран кая мар илсе, вĕсене сывă пăхса ӳстерме сăмах пачĕ.

Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхозра чăх-чĕп пăхакан В. Григорьева çăмарта тăвакан кашни чăхран 100 çăмарта илме сăмах пачĕ.

Колхозсенче, МТС-сенче тата районсенче вăйланса пыракан социализмла ăмăрту колхоз производствин мĕнпур отраслĕсене пĕрмай малалла аталантарма пур резервсемпе те туллинрех усă курма пулăшать.

Эпир, колхоз председателĕсем, МТС директорĕсемпе, районсенчи парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен руководителĕсемпе пĕрле республикăри канашлăва пухăнса, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе республика умĕнче тăракан ответлă задачăсене сӳтсе яврăмăр. Хамăр вăйсене виçсе пăхса, Мордва республикипе Мари республикинчи ялхуçалăх работникĕсемпе малалла та социализмла ăмăртса ĕçлеме йышăнтăмăр, Чăваш республикинчи колхозниксен, колхозницăсен, МТС-сенче ĕçлекенсен, ялхуçалăх специалисчĕсен ячĕпе 1953 çул валли çакăн пек социализмла обязательствăсем илетпĕр:

1. Ялхуçалăх культурисем акса тăвас тĕлĕшпе государство панă плана кашни район, кашни колхоз тăрăх тултармалла.

Республикипе кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнертан кая мар тырпул туса илмелле, вăл шутран: ыраш—17 центнер, сурхи тулă—16 центнер, йĕтĕн вăрри—4,1 центнер, йĕтĕн сӳсĕ—4,1 центнер, кантăр вăрри—4 центнер, кантăр сӳсĕ—4,3 центнер, махорка—15 центнер, хăмла—7 центнер, çĕрулми — 150 центнер, нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕ—1,5 центнер, çавнашкалах ытти ялхуçалăх культурисем енĕпе те планра кăтартнинчен пысăкрах тухăçлăх илмелле.

Пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем туса илес тĕлĕшпе хамăр йышăннă обязательствăсене пурнăçлас тесе, совет агробиологи науки тунă çитĕнӳсемпе тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе колхоз производствинче çине тăрса усă курмалла. Ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те агротехника вĕрентнĕ пек лайăх туса ирттермелле, пур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те ӳстерме май паракан агротехникăлла мероприятисене пурне те пурнăçламалла.

Ир акакан сурхи культурăсене 6—7 ĕç кунĕнче акса хăвармалла. Сурхи тĕштырă культурисен сортлă паха вăрлăхне акмалла. Çуркунне кĕрхи тырăсене тата кĕркунне сĕртме тунă çĕре талкăшпах сӳрелемелле, кĕрхи тырăсене сурринчен кая мар, нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăх участокĕсене талкăшпех вырăнти тата минераллă удобренисемпе апат памалла.

Тырпула лайăх пăхса çитĕнтермелле. Ырашпа хуратула талкăшпех искусственнăй майпа шăркалантармалла.

Июнĕн 10-мĕшĕччен таса сĕртме туса пĕтермелле, сĕртме пуссине çу каçах çемçе тытмалла, унта çумкурăксем пулмалла мар.

Кĕрхи культурăсене агротехника кăтартнă чи лайăх срокĕсенче, 5—6 ĕç кунĕнче акса хăвармалла.

Мĕнпур тырпула тăккаламасăр вăхăтра пухса кĕртмелле. Тырпул пухса кĕртнĕ чухне комбайнсемпе тата МТС-семпе колхозсен ытти машинисемпе лайăх усă курмалла.

1954 çулта сурхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкĕ çинче октябрĕн 15-мĕшĕччен талкăшпех кĕрхи сĕртме тумалла.

2. Выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстермелли 1953 çулхи государство планне пур йышши выльăхпа кайăк-кĕшĕк тăрăх та кашни колхозра, кашни районта тата пĕтĕм республикипе ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

Кашни 100 кĕсре пуçне 60 тихаран кая мар, кашни 100 ĕне пуçне 90 пăруран кая мар, кашни 100 сурăх пуçне 110 путекрен кая мар, кашни сысна ами пуçне 14 сывă çураран кая мар илмелле. Çамрăк выльăха пĕтĕмпех пăхса ӳстермелле.

Кашни ĕне пуçне 1.400 килограмран кая мар сĕт суса илмелле, кашни çитĕннĕ сурăхран вăтам шутпа 3-шер килограмм çăм, çăмарта тăвакан кашни чăхран 80-шар çăмарта илмелле.

Общественлла выльăх-чĕрлĕх валли пур колхозсенче те апат çителĕклĕ хатĕрлеме çирĕп никĕс тумалла, çакна тума нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксем, выльăх кăшманĕ, силос культурисемпе ытти культурăсем ытларах акмалла, çак шутпа хура пусăн чылай пысăк лаптăкĕпе усă курмалла. Выльăх апачĕ валли акнă е лартнă культурăсен лаптăкне висĕ хутчен кăпкалатса çемçетмелле. Çарансене, кĕтӳ сӳретмелли вырăнсене лайăхлатмалла.

Нумай çул ӳсекен курăк утти кашни гектартан вăтам шутпа 30 центнертан кая мар, çаран утти—22 центнертан кая мар, выльăх кăшманĕ—300 центнертан кая мар, силос культурисем—250 центнертан кая мар туса илмелле.

Тырă вырма тухиччен утă çулса пухса кĕртмелле. Курăксене иккĕмĕш хут вăхăтра çулса илмелле, кĕрхи тата сурхи тĕштырăсен уламне пĕтĕмпех пухса кĕртмелле. Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне выльăх кăшманне, сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне силос культурисене пухса кĕртмелле. Çĕрулми, пахча çимĕç тата выльăх кăшманĕсен çулçисемпе силос тума усă курмалла.

Силос 200 пин тоннăран кая мар хывмалла, çапла вара кашни ĕне пуçне 30 центнертан кая мар, çамрăк ĕне пуçне выльăх пуçне—5 центнер, кашни сысна ами валли, çурисемпе пĕрле шутласан—20 центнер, кашни сурăх валли—0,5 центнертан кая мар силос тивмелле пултăр.

Кашни колхозрах выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăсем тумалла.

Выльăх апатне пĕтĕмпех вăхăтра йышăнса тĕрĕс шута илмелле. Улăма выльăха париччен обязательнăй йĕркепе çимĕ хатĕрлемелле, турамалла, çемçетмелле, тутлантармалла.

Ыраш акса, нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксем акса, пур колхозсенче те симĕс конвейер тумалла.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхас тата тăрантарас ĕçе лайăхлатмалла, выльăх пăхас ĕçре хуçасăрлăха, выльăх пăхакансем улшăнса тănине, ĕçленĕшĕн тӳленĕ чухнехи уравниловкăна пĕтĕмпех пĕтермелле.

Выльăх-чĕрлĕх валли витесем тăвас тата юсас ĕçсене анлăн сарса ямалла, çак ĕçсен планне октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултармалла. 1953 çулта 3 пин лаша валли, 10 пин ĕне валли, 10 пин пăру валли, 30 пин сысна валли, 25 пин сурăх валли, 150 пин чăх валли, 285 пин чĕп валли витесем, 30 пин тонна силос хывмалăх башньăсемпе сурма башньăсем тумалла.

Сурт-йĕр тăвас ĕçре вырăнти строительство материалĕсемпе анлăн усă курмалла.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхнă чухнехи йывăр ĕçсене, уйрăмах выльăх апачĕ хатĕрлес, шыв парса тăрас ĕçсене механизацилемелле. Апат хатĕрлемелли кухньăсем тата шăвармалли вырăнсем тумалла.

3. Государствăна тырă памалли плана—октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

4. Республикăри машина-трактор станцийĕсен ĕçне лайăхлатмалла, вăй нумай илекен ĕçсене колхоз производствин пур отраслĕсенче те механизацилеме МТС-сене ытларах хутшăнтармалла тата ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес, выльăх-чĕрлĕхрен продукт ытларах илес тĕлĕшпе вĕсен ответлăхне хăпартмалла.

Техникăна тухăçлă ĕçлеттермелли чи лайăх меслетсемпе усă курмалла, машинăсене ахаль лартмалла мар, пур МТС-сенче те тракторсемпе икĕ сменăпа ĕçлессине организацилемелле, пур трактористсен те, комбайнерсен те, молотилка машинисчĕсен те сменăри тата сезонти ĕç нормисене тултармалла тата ирттерсе тултармалла.

Кашни 15 лаша вăйлă тракторпа вăтам шутпа 500 гектартан кая мар ĕçлемелле, «Коммунар» комбайнпа—180 гектар, «Сталинец» комбайнпа—360 гектар, самоходнăй комбайнпа—280 гектар тырпул пухмалла, кашни «МК-1.100» молотилкăпа 700 тонна тырă çапмалла.

Горючие 5 процент, ремонт тума кирлĕ япаласене 5 процент перекетлемелле, тракторпа тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне 8 процент йӳнетмелле.

Трактористсене, комбайнерсене, прицепщиксене тата МТС-сенчи ытти работниксене ĕçленĕ чухне пурăнма лайăх условисем туса пама куллен тăрăшмалла.

Кашни трактор бригадинче лайăх туса хатĕрленĕ пĕчĕк вагонсем пулмалла. Трактор бригадисем валли горючи, шыв вăхăтра кӳрсе памалла, бригадăсенче ялан ĕçлеме прицепщиксем, çавăн пекех ытти çынсем уйăрса памалла. Тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе ĕçлеме пусăсене вăхăтра хатĕрлемелле.

5. Колхозсен укçа-тенкĕ тупăшĕсене ӳстерес шутпа, техникăлла культурăсем ытларах та ытларах акса тунипе пĕрлех, колхозсенче тĕрлĕ отраслĕсене аталантарма—сад, пахча çимĕç, пыл хурчĕ ĕрчетес тата ытти ĕçсене аталантарма уйрăмах тăрăшмалла.

Пахча çимĕç культурисем акса-лартса хăвармалли плана пур колхозсенче те тултармалла. Теплицăсемпе парниксен хуçалăхне ӳстермелле.

Кăçал пур колхозсенче те сад тата утар пулмалла. Кашни вĕлле пуçне 35 килограмран кая мар пыл, 750 грамм ăвăс илмелле.

6. Сутçантăлăка урăхлатса çĕнетмелли сталинла плана пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса кĕрешмелле. 1.000 гектар çинче уй-хире хӳтĕлекен вăрман тăрăхĕсем тумалла, халĕ ӳсекен вăрман тăрăхĕсене 600 гектар йывăç лартса тата колхоз питомникĕсенче 30 гектар йывăç вăрри акса хăвармалла. Вăрман тăрăхĕнчи йывăçсене лайăх пăхса çитĕнтермелле, вĕсене çĕмĕрсе-хуçса пĕтересрен сыхламалла.

1953 çулта 350 пĕве тата кӳлĕ тумалла, вĕсене пулă ямалла.

7. Ялхуçалăх артелĕн сталинла Уставне çирĕп пурнăçласа пырса, общественлла хуçалăха çирĕплетсе тата ӳстерсе пырассишĕн, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешмелле.

Государство умĕнчи пирвайхи тивĕçе—тырпул хатĕрлевĕн планне пурнăçланă хыççăн вăрлăх, фураж тата общественлла ытти фондсене кирлĕ чухлĕ туса çитермелле. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх тупăш нумайрах валеçсе памалла тăвас пулать.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Чăваш республикинчи колхозниксен, колхозницăсен, МТС-сенче ĕçлекенсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен

СОЦИАЛИЗМЛА ОБЯЗАТЕЛЬСТВИСЕМ

(Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерес тата ĕçри дисциплинăна çирĕплетес пулмалла. Ялхуçалăх производствинче малта пыракансем тунă çитĕнÿсене шута илсе, ĕç нормисене çĕнĕрен пăхса тухмалла. 1953 çулта ĕçлеме пултаракан кашни колхозника 250 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла. Çак шутпах пур колхозсенче те производство бригадисене çирĕплетес, колхозниксене ялан пĕр бригадăра ĕçлемелле тăвас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Производство планĕсене, тупăшсемпе расходсен сметисене, ĕç заданийĕсемпе ĕç планĕсене пур колхозсенче те вăхăтра туса хатĕрлемелле.

8. Колхозсем валли кадрсем хатĕрлесси тата вĕсемпе ĕçлесси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла, çак ĕçе колхозсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн татса пама чи кирлĕ условисенчен пĕри тесе шутлас.

Производство бригадисен бригадирĕсем, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем пулма тата звеносене ертсе пыма опытлă колхозниксене уйăрса лартас пулать.

Висĕ çул вĕренмелли агрозоотехника курсĕсен ĕçне лайăхлатмалла.

Районсенче уйăхра 1—2 хут колхоз председателĕсен, участокри агрономсен, механиксен, трактор бригадисен тата производство бригадисен бригадирĕсен семинарĕсене ирттермелле, вĕсенче ĕç результачĕсене пăхса тухмалла тата пĕр-пĕрин опычĕпе паллаштармалла.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарас тата выльăх-чĕрлĕхрен продукци ытларах илес ыйтусем тăрăх пур колхозсенче те, зооветеринари специалисчĕсемпе пĕрле, кашни уйăхрах выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсен канашлăвĕсене ирттермелле.

Интеллигенцин вăйĕпе колхозсенче политика, наукăпа ăсталăх, ялхуçалăх ыйтăвĕсем çинчен час-часах лекцисем, докладсем ирттермелле.

Çак социализмла обязательствăсене пурнăçласа пынине тăтăшах тĕрĕслесе, сÿтсе ямалла. Пур колхозсенче те социализмла ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем тумалла. Районсем, МТС-сем, колхозсем, бригадăсем, звеносем тата уйрăм колхозниксем социализмла обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине пĕр-пĕрин хушшинче тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

* * *

Социализмла ăмăртура ответлă обязательствăсем илсе, эпир вĕсене пурнăçлама нумай вăй кирлине лайăх пĕлсе тăратпăр. Хамăрăн обязательствăсене чыслăн пурнăçлама мĕн кирлине эпир пурне те тăвăпăр. Эпир çакна лайăх ăнланатпăр: вăйлă тырпулшăн тата обществăлла выльăх-чĕрлĕхĕн малашнехи ÿсĕмĕшĕн кĕрешни вăл—партин XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни, колхоз стройне малалла çирĕплетсе, вăйлатса пырассишĕн кĕрешни, хамăр çĕршывра коммунизм тăвасси çинчен аслă Сталин каласа хăварнисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешни пулать.

Хамăрăн тăван Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви таврах тата та тачăрах пĕтĕçер!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă социализмла Тăван çĕршыв, пирĕн паттăр совет халăхĕ!

Сывă пултăр хамăрăн тăван Совет правительстви!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ тата унăн ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ—пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас ĕçе ертсе пыракан штаб!

Çуракине тухма хатĕррине тĕрĕслеççĕ

ВĂРМАР. «Ударник» колхоз правленийĕ çуракине хатĕрленес ĕççене куллен ертсе пырать. Кăçал çеç колхоз председательне суйланă Елизавета Андроникова юлташ хăйĕн пĕтĕм пĕлÿлĕхне коллективла хуçалăха тĕрĕс йĕркелесе пырас ĕçе парать. Вăл—опытлă агроном.

Ялхуçалăх ĕçĕсен çулталăкри производствăлла планне туса çирĕплетнĕ хыççăн, колхоз правленийĕ бригадирсемпе пĕрле çуракине ирттермелли ĕç планĕ турĕ, производство бригадисене пăхса тухса çирĕплетрĕ, ĕç вăйĕпе туртăм вăйне ĕçе вырнаçтарса тухрĕ. Машинăсемпе усă курмалли график туса вĕсемпе тумалли ĕçсен талăкри нормисене кăтартса пачĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕç кăçал йĕркеллĕрех пулса пырать. Колхоз тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн пыракан кĕрешĕве хĕллехи вăхăтра тислĕк тата ытти удобренисем нумай кăларса хатĕрлес ĕçрен пуçларĕ. Уя 8 пин лав тислĕк кăларса купаларĕ, минераллă удобренисем 70 тонна кÿрсе килчĕ, 150 центнер кĕл пухтарчĕ.

Вăрлăх хатĕрлес ĕçе чи малти вырăна хунă. Кашни культура вăрлăхне, вăл шутра нумай çул ÿсекен курăксен вăррине те, акма кирлĕ таранах хатĕрлесе çитеричченех Андроникова юлташ канăç пĕлмерĕ, бригадирсене те хĕрÿллĕн ĕçлеме тиврĕ.

Çак кунсенче правлени бригадăсем çуракине тухма хатĕрленсе çитнине пăхса тухрĕ. Тĕрĕслÿ çакна кăтартса пачĕ. Д. Димитриев, М. Борисова, И. Димитриев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем çураки ĕçĕсене ирттерме хатĕрленсе çитнĕ. Хĕллехи ĕççене пурне те тунă, машинăсемпе инвентаре юсавлă, лашасене пăхас ĕçе лайăхлатнă. Кашни бригадăн çураки ирттермелли ĕç планĕ пур, ăна бригадăри колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетнĕ.

«Ударник» колхоз членĕсем, партин XIX-мĕш съезчĕ социализмла ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсемпе хавхаланса, кăçал кашни гектартан 17-шер центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне нумай хăпартассишĕн пĕтĕм вăйран кĕрешме пулса, пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсем çав обязательствăсене чыслăн пурнăçлĕç. **Г. МАТВЕЕВ.**

ТРАКТОР БРИГАДИ СТРОИТЕЛЬСТВО ĔÇНЕ ХУТШĂНАТЬ

ÇĔРПУ. «Красный Октябрь» тата «Победа» колхозсем кăçал обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли çĕнĕ витесем тума хăйсенчен 25 километрти вăрман участокĕнче йывăç материал туяннă. Анчах ăна турттарма тытăнсан йывăрлăх тухса тăнă, — пысăк та чĕрĕ юман юпасене чи вăйлă лашасем те туртса çитерме пултарайман.

Чăрмава çĕнтерме колхозсене районти МТС пулăшрĕ.

Механизаторсем ДТ-54 тракторпа икĕ колхоза кĕске вăхăт хушшинче пурĕ 60 кубометра яхăн юман юпасем турттарса панă. Çăмăлрах йывăç материала колхозсем хăйсен туртăм вăйĕпе кÿрсе хунă. Çитес вăхăтра икĕ колхозра та строительство ĕçĕсем пуçланаççĕ.

«Большевик» колхоз членĕсем те строительство материалне тракторпа турттарса панăшăн тав тăваççĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Агротехникăна пăсни пулмалла мар

СĔНТĔР. Районти «Большевик» колхоз (председателĕ Захаров юлташ) апрелĕн 4-мĕшĕнче вĕрки тырăсен калчине тислĕк шĕвекĕ сапса пама тытăнчĕ. Пурĕ 49 гектар çинчи калча çине тислĕк шĕвекĕ сапнă. Çак колхозах 11 гектар çине клевер акнă. Анчах клевера пучахлă курăксемпе хутăш тата сеялкăсемпе ретлĕн акма кирлине «Большевик» колхоз председателĕ шута илмен. Нумай çул ÿсекен курăксене пурне те сеялкăпа акса хăвармалла, агротехникăна пăсни пулмалла мар.

А. СОЛОВЬЕВ.

Вăрлăха яровизацилесе акмалла

Вăрлăха яровизацилесе акни тырпул тухăçлăхне ÿстермелли майсенчен пĕри пулса тăрать. Вăрлăха яровизацилесе аксан, тырпул тухăçлăхĕ гектар пуçне 2—5 центнер ÿсет.

Яровизацилесе акнă вăрлăх малаларах тата тикĕс шăтать, калча тымарĕсем хăвăртрах тарăна каяççĕ. Калча тĕмĕленнĕ чухне иккĕмĕш тымарсем вăйлăрах ÿсеççĕ, çавна пула ÿсентăран тăпрари нÿрĕ лайăхрах илсе тăрать, калча вăйлă çитĕнсе, çумкурăксене аталанма памасть.

Тĕрлĕ культурăсен яровизаци условийĕ тĕрлĕ пулать. Тĕрлĕ культура вăрлăхне шÿтерме шыв хисепĕ те тĕрлĕрен кирлĕ, çавнашкалах вăрлăха яровизацилемелли температура та, кун хисепĕ те тĕрлĕрен пулаççĕ.

Яровизацилеме хуракан вăрлăха лайăх тасатас пулать, мĕншĕн тесен выçă тата ванчăк вăрăсем часах кăвакарса каяççĕ. Начар шăтакан вăрлăх та яровизацилеме юрăхлă мар. Сĕлĕ, урпа, вир вăрлăхне формалин шĕвекĕпе чÿхемелле, çакна тума вăрлăха иккĕмĕш хут йĕпетнĕ чухне кашни 10 литр шыв çине 32—33 кубла сантиметр 40 процентлă формалин хушаççĕ. Формалин шĕвекĕ пăтранчăк мар, таса пулмалла.

Сĕлĕпе урпа вăрлăхне хирти ĕççене тытăниччен (кĕрхи сĕртме уйне сÿреличчен) 3—5 кун, тулă вăрлăхне 3 кун маларах, вир вăрлăхне акиччен 7—10 кун маларах яровизацилеме хураççĕ.

Яровизаци тума вăрлăха лупасайне, сарайне, пысăкрах кĕлете хума юрать. Пур енчен те уçă, çине кăна витнĕ лупасайне хурсан тата аванрах. Хуралт суйласа илнĕ чухне унта вентиляци лайăх пулмаллине шута илес пулать. Яровизаци тума малтанах термометрсем, лейкăсем, шыв каткисем, тимĕр витресем, йывăç кĕреплесем, йывăç кĕреçесем, веялкăсем, тараса тата брезент хатĕрлесе хумалла.

Яровизацилеме хуракан вăрлăх çине инструкцире кашни культура валли мĕн чухлĕ кăтартнă, çавăн чухлĕ шыв сапмалла. Шыв ытларах сапсан, вăрлăх ытлашши шăтса каять, вара ăна сеялкăпа акма çук. Шыв сахалтарах сапсан, яровизаци тапхăрĕ вăрах пулать, вăрлăх вăхăтра яровизациленсе çитме ĕлкĕреймест. Çавăнпа та йĕпетиччен малтан вăрлăха виçсе пăхса, урайне купа туса хураççĕ. Купара тырă 3 тоннăран мала пулмалла мар. Вăрлăх мĕн чухлине кура яровизацилеме кирлĕ таран шыв сапаççĕ. Вăрлăх нÿрлĕхĕ 13 процент пулсан, яровизацилеме кашни центнер пуçне çакăн чухлĕ шыв кирлĕ пулать: сĕлĕпе урпа валли 35 литр, тулă валли 31 литр. Вăрлăх нÿрлĕхĕ 13 процентран каярах е ытларах пулсан, шыв та нумайрах е сахалрах кирлĕ. Сăмахран, вăрлăх нÿрлĕхĕ 2 процент каярах пулсан, шыв икĕ литр ытларах кирлĕ, нÿрлĕхĕ ытларах пулсан, шыв сахалтарах кирлĕ пулать. Вăрлăх шыва тÿрех сăхса илеймест. Çавăнпа та ăна пĕр хут мар, виçĕ хут (сĕлле, урпана, тулла) йĕпетмелле, вире икĕ хут йĕпетеççĕ.

Вăрлăха малтанхи хут яровизацилеме кирлĕ шывăн виççĕмĕш пайĕпе кăнтăрла иртсен йĕпетеççĕ. Пĕр çын лейка али витĕр вăрлăх купи хĕррине шыв сапать, тепĕр çын йĕпеннĕ вăрлăха йывăç кĕреçепе айккинелле сирсе тăрать. Çапла йĕпетнĕ хыççăн, вăрлăха 25—30 сантиметр хулăнăш купа туса хумалла. Ик-виçĕ сехетрен, йĕпе пĕрчĕсем типĕрех пĕрчĕсемпе лайăхрах хутшăнччăр тесе, вăрлăха кĕреçепе пăтратмалла. Вăрлăх шыва лайăх сăхса илнĕ хыççăн, ăна иккĕмĕш хут йĕпетмелле. Иккĕмĕш хут ăна тепĕр кунне малтанхи пекех йĕпетеççĕ.

Вăрлăх купинчи температура 5 градус ăшăран кая пулмалла мар, сивĕрех чухне вăрлăха ытларах витсе тăратмалла. Çакăн хыççăн купасене уçаççĕ те лайăх пăтратаççĕ, унтан 20—25 сантиметр хулăнăш сий туса сарса тухаççĕ. Вăрлăх çине хĕвел çути ÿкмелле мар.

Иккĕмĕш хут йĕпетнĕ хыççăн 6 сехете яхăн иртсен, вăрлăха виççĕмĕш хут йĕпетеççĕ. Виççĕмĕш хут йĕпетме илнĕ шыва икĕ пая уйăрсан аван: пĕр пайне иккĕмĕш хут йĕпетнĕ хыççăн 6 сехетрен, тепĕр пайне—вăрлăх шыва сăхса илсен сапмалла.

Юлашки хут йĕпетнĕ хыççăн купана термометр лартмалла, купари температура 10—12 градусран çÿле хăпармалла мар, температура ÿссен, вăрлăха кĕреçепе пăтратмалла, çÿхерех сарса хумалла. 10—12 градус ăшăра уйрăм пĕрчĕсем юлашки хут йĕпетнĕ хыççăн 15—20 сехетрен сăмсаланма пуçлаççĕ.

Яровизацилеме куллен пĕр кун акма кирлĕ чухлĕ вăрлăх хырса пымалла.

Сĕлĕпе урпа вăрлăхне 10—12 градус ăшăра 15—20 сехет тытмалла. Унтан, кăштах сăмсаланнă пĕрчĕсем 3 процента çитессе кĕтмесĕрех, вăрлăха пăтратса тата çÿхе сийĕн сарса хурса, температурăна 2—3 градус таран чакармалла. Сĕлĕпе урпа вăрлăхне 2—5 градус температурăра 10—14 кун хушши тытаççĕ, кашни кун темиçе хутчен пăтратаççĕ. Тулă вăрлăхне виççĕмĕш хут йĕпетнĕ хыççăн 10 градус ăшăра 5—7 кун хушши яровизацилеççĕ. Йĕпетме пуçланă хыççăн 3—4 кун иртнĕ тĕле тулă вăрлăхĕ 3 процентран каярах е пĕрре сăмсаланман пулсан, ăна татах шывпа йĕпетмелле (кашни 100 килограмм вăрлăх пуçне 1—3 литр шыв сапмалла).

Яровизаци срокĕ иртнĕ хыççăн, вăрлăха ретлĕ сеялкăпа акмалла. Çанталăк начар тата çĕр типсе çитеймен пирки акма тухма май çук чухне вăрлăха çÿхе сийĕн сарса усăлтармалла. Акма тухнă тĕле вăрлăх яровизациленсе çитмен пулсан, малтан пĕр-икĕ кун хушши ахаль вăрлăх, унтан обязательнă яровизациленĕ вăрлăх акмалла. Вăрлăх яровизациленсе çитмен тесе акма кая юлмалла мар. Кая юлса аксан, тырпул начар пулать.

Яровизациленĕ вăрлăх яровизацилемен вăрлăхран шултрарах пулать. Çавăнпа та сеялкăна малтанах йĕркелесе лартмалла. Яровизацилемен вăрлăха мĕнле нормăпа акаççĕ, яровизациленĕ вăрлăха та çав нормăпах акмалла. Сеялка яровизациленĕ вăрлăха кирлĕ нормăпа акма пултарайман чухне, хĕреслĕ акаççĕ, вара сеялкăна çур норма акма лартаççĕ. Ун пек чухне урлă та, тăрăх та пĕр кунта е харăсах икĕ сеялкăпа акас пулать. Сайра акни пулмалла мар.

Вăрлăха яровизацилесе акни пысăк усă кÿнине нумай колхозсен ĕçĕнчи тĕслĕхсенчен курма пулать. Сĕнтĕр районĕнчи «Новая Юнга» колхозра яровизациленĕ вăрлăхпа акнине пула сĕлĕ тухăçлăхĕ 1950 çулта гектар пуçне 4,45 центнер, 1951 çулта—3,45 центнер ÿснĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхоз та яровизациленĕ вăрлăх акса тырпул тухăçлăхне чылай ÿстернĕ.

Анчах иртнĕ çулта нумай колхозсенче вăрлăха яровизацилемен, пучахлă тырăсене пуринчен ытла яровизацилемен вăрлăхпа акса хăварнă. Чылай çĕрте çак ĕçе хуралтсем, хатĕрсем, термометрсем тата яровизаци тума пĕлекен опытлă çынсем çук пирки туман. Кăçал та ку тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем нумаях мар-ха.

Районти ялхуçалăх пайĕсем, машинăпа трактор станцийĕсен участокри агрономĕсем колхозсенче вăрлăха яровизацилеме хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха. Сăмахран, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Çĕрпÿ, Çĕмĕрле районĕсенче ку таранччен те яровизаци тума çынсем вĕрентсе хатĕрлемен, вĕсене вĕрентес ĕçе организацилемен. Ялхуçалăх снабжени пункчĕсенче термометрсем çителĕклĕх пулин те, нумай колхозсенче вăрлăх купинчи температурăна виçме термометрсем çук.

Вăрлăха яровизацилеме шутлă кунсем кăна юлчĕç. Ку тĕлĕшпе иртнĕ çулхи йăнăшсене тумалла мар. Вăрлăха яровизацилеме пур енĕпе те лайăх хатĕрленмелле.

Агрономсен вăрлăха яровизацилеме мĕнле хатĕрленнине тата яровизаци тăвас ĕçе пысăк пахалăхпа ирттернине куллен тĕрĕслесе тăмалла. Вăрлăх яровизацилес ĕçĕн планне туса, кашни колхозра çак ĕçшĕн ответлă çынсене уйăрмалла. Республикăри колхозсен уй-хирĕсене пĕтĕмпех яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăвармалла.

Агроном Т. ЕГОРОВА.

Пуçламăш парторганизацисен ĕç опытĕнчен

Ăмăртăва ертсе пырасси

Производство планне тултарма, ĕç дисциплинине çирĕплетме тата социализмла ăмăртăва вăйлатма массăсене мобилизацилесси пуçламăш парторганизацисен Уставра палăртнă тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. Пирĕн колхозри парти организацийĕ артель умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешнĕ чухне социализмла ăмăртупа яланах анлă усă курма тăрăшнă тата тăрăшать те. Çавăнпа та халĕ пирĕн колхоз—республикăра малта пыракан колхозсенчен пĕри.

Ăмăртăва организацилесси халăха умра тăракан задачăсене ăнлантарса панинчен пуçланать. Çак шутпа колхозниксене производство планĕпе тĕплĕн паллаштаратпăр. План тунă чухне малта пыракансен çитĕнĕвĕсене хисепе илетпĕр. Пирĕн план малтан мала кайма хавхалантарса пыракан вăй пулса тăрать. Умри задачăсене пĕлсе тăракан çынсем плана пурнăçлама çĕнĕрен те çĕнĕ майсем шыраса тупма тăрăшаççĕ.

Висĕ çул каярах Валентина Степановна Григорьева юлташ кашни гектартан 30-шар центнер ыраш туса илессишĕн кĕрешме сăмах пачĕ. Коммунистсем ун çинчен колхозниксене бригада пухăвĕнче каласа ăнлантарчĕç. Валентина ĕмĕчĕ бригадăри мĕнпур çынсене хумхантарчĕ. Вăл тырă тухăçне мĕнле майсемпе ÿстерме шутлани çинчен каласа кăтартнă хыççăн, колхозниксем бригада участокĕнчи кашни гектар çинчен 22-шер центнер ыраш туса илессишĕн ăмăртса ĕçлеме сăмах пачĕç.

Валентина Григорьева пуçарăвĕ çинчен парторганизаци пухăвĕнче ятарласа ыйту лартса сÿтсе яврăмăр. Коммунистсем унăн пуçарăвне пур майсемпе те сарма кирлине паллă турĕç. Тепĕр кунне çав ыйтупах агитаторсен семинарне ирттертĕмĕр. Агитаторсем В. Григорьева пуçарăвĕ çинчен хăйсене çирĕплетсе панă вунă килсенче ăнлантарса пачĕç. Кашни колхозник тырă тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе хăй мĕн тума пултарни çинчен тĕплĕн шухăшланă тата хăйĕн вăйне висе пăхнă хыççăн, бригадăсенче пухусем ирттертĕмĕр. М. Яковлев коммунист ертсе пыракан бригадăри колхозниксем ăмăртăва тата анлăрах сарма—ыраша пĕрлех çурхи тулă тухăçне ÿстерессишĕн те кĕрешме сăмах пачĕç.

Çакă пире мĕнпур колхозниксене вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешĕве хутшăнтарма пулăшрĕ. Малтан ăмăрту ыраш тухăçне ÿстерес тĕллевпе кăна пуçланнă. Кайран вăл, ăмăртакансен йышĕ нумайланса пынă май, мĕнпур культурăсен тухăçне ÿстерессишĕн пыракан кĕрешÿ пулса тăчĕ.

Григорьева юлташ 12 гектар чухлĕ çĕр çинче кашни гектартан 31-шер центнер ыраш туса илсе, Социализмла Ĕç Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл ĕçлекен бригада кашни гектартан 24,6 центнер ыраш пуçтарса кĕртрĕ. Колхоз хăйĕн мĕнпур çĕр лаптăкĕнчи кашни гектартан 19-шар центнер тĕштырă туса илчĕ.

Партипе правительство колхозниксен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. Тырă тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе хастарлă ĕçленĕшĕн пирĕн колхозри икĕ çынна Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă, 50 çын орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă.

Колхоз кÿршĕри «Коммунизм» артельпе ăмăртса ĕçлет. Ăмăртса ĕçлекен колхозпа çирĕп çыхăну тытатпăр. Иртнĕ çулта пирĕн колхоз председателĕ И. Григорьев юлташ унта пулса колхоза организацилесе хуçалăх енчен тĕреклетсе пырасси çинчен доклад туса панă. Яковлев коммунист хăй ертсе пыракан бригада тырă тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе мĕнле кĕрешни çинчен лекци вуласа пачĕ. Ăмăрту договорне мĕнле пурнăçланине колхозсем пĕр-пĕрин патне вăхăтран вăхăта представительсем ярса тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕсленĕ вăхăтра кÿршĕсен опычĕпе тĕплĕн паллашма тăрăшаççĕ.

Çынсен пуçарулăхĕ çăлкуç пек тапса тăтăр, ĕçри хастарлăх ан чактăр тесе, эпир бригадăна бригада тата уйрăм колхозниксем хушшинче ăмăрту договорĕсем тăвассине йĕркелетпĕр. Кайран ăна пурнăçланине пурне те пĕлтерсе тăратпăр.

Ăмăрту мĕнле пынине халăха тĕрлĕ майсемпе пĕлтеретпĕр. Бригадăсенчи боевой листоксемпе колхозри стена хаçачĕ çулталăкĕпех йĕркеллĕ тухса тăраççĕ. Хаçатсен кашни номерĕнчех ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан статьясемпе сводкăсем пулаççĕ. Пĕр-пĕр бригада е уйрăм колхозник пысăк çитĕнÿ тунă пулсан, ун çинчен мĕнпур бригадăсенчи боевой листоксенче çыратпăр е ятарласа «Çиçĕм» хаçат кăларатпăр. Стена хаçачĕпе боевой листоксем, малта пыракансен ĕçĕсене кăтартнипе пĕрлех, ĕçре чăрмантаракансене те критиклеççĕ.

Эпир хаçат çине çĕнĕ ĕç çинчен ăна пуçаракансене хăйсене çыртарма тăрăшатпăр. Мĕншĕн тесен, малта пыракан опыт çинчен тĕрĕс те хумханмалла каласа пама пĕр вĕсем кăна пултараççĕ.

Колхозниксем хăйсем илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине эпир кăтарту хăми, ăмăрту хăми, хисеп хăми урлă та кăтартса тăратпăр. Вăл хăмасем колхозра кăна мар, бригадăсенче те пур. Кăтарту хăми çине кам мĕнле обязательство илнине çырса пĕлтеретпĕр. Илнĕ обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе кам мĕнле ĕçленине ăмăрту хăми çинче кăтартатпăр. Хисеп хăми çине вара ĕçе туса пĕтерни хыççăн чи мала тухнă çынсен хушамачĕсене кĕртетпĕр.

Кашни тапхăрта ăмăртăва вăхăтпа условие кура ертсе пыма тивет. Вăйлă тырпулшăн пыракан ăмăртăва организацилессине илер. Малтан эпир колхоз, бригада умне пĕтĕмĕшле задача лартатпăр. Кăçал пирĕн колхоз кашни гектартан 20-шер центнер тĕштырă туса илес задача лартнă. Çав тĕллеве пурнăçлас шутпа кашни бригадăна тырă тухăçне ÿстермелли план-задани панă. Артельпе бригадăсем умне лартнă задачăна колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса паратпăр. Кайран вара вĕсем тырă тухăçне ÿстерес тĕлĕшпе хăйсем обязательствăсем илеççĕ. Çакăн хыççăн ăмăртăва уйрăм тапхăрсем тăрăх организацилетпĕр. Хĕллехи вăхăтра вăрлăх хатĕрлес, вырăнти удобрени кăларас, юр тытас, çĕрĕç хатĕрĕсемпе лаша таврашĕсене юсас тĕлĕшпе ăмăртрĕç. Çуркунне—хăвартрах нÿрĕ тытас, акса хăварас, калчасене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе; тырпул пулса çитсен, ăна пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртес тата государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татас тĕлĕшпе ăмăртаççĕ. Уйрăм тапхăрсенчи ăмăрту пĕтĕмĕшле задачăна ăнăçлă пурнăçлас тĕллевпе сăрăлса пырать.

Бригадăсенчи ăмăрту хăми çине кашни çын паян мĕн чухлĕ ĕç тунине, колхозри ăмăрту хăми çине—бригадăсем тата уйрăмах пысăк çитĕнÿ тунă колхозниксен ĕçне итог туса çыратпăр. Ăмăртăва ертсе пырас тесен, ĕçе вăхăтра шута илни кирлĕ. Ку кăткăс ĕç. Апла пулсан та, эпир ăна начар мар йĕркеленĕ. Пирĕн колхозра кашни çын ăмăрту хăми урлă хăй паян тата çулталăк пуçланнăранпа миçе ĕçкунĕ тунине пĕлсе тăрать.

Кăтарту хăми çинче уйрăм тапхăрти ĕçсем мĕнле пурнăçланса пынине кăтартатпăр. Хисеп хăми çине уйрăм тапхăрти ĕçсене туса пĕтернĕ тата ялхуçалăх çулне вĕçленĕ хыççăн чи лайăх бригадăпа колхозниксене кĕртетпĕр. Унтах вĕсен сăнÿкерчĕкĕсене çыпăçтаратпăр тата хисеп хăми çине мĕншĕн кĕртнине çыратпăр. Хисеп хăми çине кĕни пирĕн колхозра питĕ пысăк чыс шутланать. Мĕншĕн тесен, унта кама кĕртесси çинчен малтан бригада тата колхозăн пĕрлехи пухăвĕпе сÿтсе яватпăр.

Ăмăрту, кăтарту тата хисеп хăмисем ыттисене, малтисемпе танлашас тесе, хавхаланса ĕçлеме пулăшаççĕ. Сысна ферминче ĕçлекен Юлия Шашкова кашни амăна икĕ çул хушшинче пилĕк хут çуратарса 30 çурăран кая мар илессишĕн пĕлтĕр ăмăрту пуçласа ячĕ. Унăн пуçарăвне пурте хапăл туса йышăнчĕç. Анчах та малтанхи çулĕнче Шашкова юлташ 11 çура вырăнне 8 кăна илсе ÿстерчĕ. Çапах та ăна колхозри хисеп хăми çине кĕртрĕç, мĕншĕн тесен вăл ыттисенчен нумайрах çура илсе ÿстернĕ. Çакăн хыççăн А. Павлова: «Мĕншĕн Шашковăна хисеп хăми çине кĕртнĕ? Вăл та, пирĕн пекех, хăйĕн обязательствине пурнăçлайман», тесе ÿпкелешрĕ. Мала тухсан, килес çул унăн ячĕ хисеп хăми çинче пулма пултарни çинчен ăнлантарнă хыççăн, вăл та ăмăртăва хутшăнчĕ. Ăмăртса ĕçлени ăна чылай пысăк ÿсĕм тума пулăшрĕ. А. Павлова юлташ та икĕ çул хушшинче сысна амăшĕнчен 30 çура илсе ÿстерчĕ.

Ăмăрту мĕнле пынине эпир кино урлă та пĕлтерсе тăратпăр. Кăна çапла тăватпăр: таса кино ленти çине кам мĕнле обязательство илнине тата ăна мĕнле пурнăçласа пынине çыратпăр. Вара кино аппарачĕ витĕр экран çине ÿкеретпĕр. Колхоз ĕçĕнчен пăраннă пирки кая юлакансене те çак майпах питлетпĕр.

Колхозăн радиоузел пур. Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче колхозри ĕçсен кашни кунхи итогне халăха радиопа пĕлтерсе тăратпăр. Районти, республикăри хаçатсенче хамăр колхоз çинчен пичетленĕ материалсене те радиопа вуласа паратпăр.

Колхоз правленийĕпе парторганизацин кусса çÿрекен хĕрлĕ ялав пур. Хĕрлĕ ялава, хуçалăх ĕçне вĕçленĕ хыççăн, чи пысăк тухăçлă тырă туса илнĕ бригадăна паратпăр. Ялав вара çулталăкĕпех çав бригадăра пулать. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче хĕрлĕ ялава Яковлев юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригада илчĕ. Малашне тепĕр хĕрлĕ ялав туса выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăна пама шутлатпăр.

Колхоз председателĕ уй-хирте, фермăсенче ĕçлекен бригадирсене тата техникăлла культура туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевойсене пухса кашни кунах производствăлла канашлу ирттерет. Унта, ĕç итогне туса, ăмăртура хăш бригада мĕнле вырăн йышăннине паллă тăваççĕ. Çавăнтах бригадирсемпе звеньевойсем пĕр-пĕрне малта пыракансен меслечĕсемпе паллаштараççĕ.

Парти организацийĕ ăмăрту итогĕсене агитаторсем урлă та пĕлтерсе тăма тăрăшать. Агитаторсем, малта пыракансем çинчен каласа кăтартнипе пĕрлех, вĕсен меслетне хăйсен аллисемпе ĕçлесе кăтартса параççĕ. Кунсăр пуçне, ыттисем мĕнле ĕçленине ыйтса пĕлме тăрăшаççĕ. Колхозниксем калаçу ирттерекенсене хăйсен шухăш-кăмăлĕсене пĕлтереççĕ.

Пирĕн кашни бригадăрах пĕрер коммунист та пулсан ĕçлет. Вĕсем хăйсем таврара бригадăри 4—5 комсомолецпа тата стахановецсене пĕтĕçтерсе тăраççĕ. Çав актив сăмахпа та, ĕçпе те ăмăртăва куллен-кун вăйлатса пыма парторганизацие пулăшать. Ăмăртăва парти организацийĕ вĕсем урлă ертсе пырать тесен те тĕрĕс пулать.

Парти организацийĕ ăмăртăва ертсе пырас ĕçре малта пыракансен опытне тĕпчесе пĕлессине пысăк вырăна хурать, ку ĕçе ялхуçалăх специалисчĕсене хутшăнтарать. Тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн, ун çинчен мĕнпур колхозниксене каласа ăнлантаратпăр. Ятти лекторсем колхозри стахановецсен опычĕ çинчен докладсемпе лекцисем туса параççĕ. Лекторсем ялхуçалăх наукипе малта пыракан практикăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене сарма та пире активлă пулăшаççĕ.

Хамăр колхозри стахановецсене те эпир пухусенче, агрономипе зоотехникăна вĕренмелли висĕ çуллăх курссен занятийĕсенче хăйсен çитĕнĕвĕсемпе ĕç меслечĕсем çинчен калаçусемпе докладсем ирттерме хушатпăр. Çавăн пекех, радиопа та калаттаратпăр.

Колхозниксен ăмăртăвĕн тĕллевĕ вăл—тырпул тухăçлăхне ÿстерессипе тата выльăх-чĕрлĕхрен ытларах тупăш илесси. Çавăнпа ĕнтĕ, ĕçе тĕрĕс шута илнисĕр пуçне, уншăн тÿлессине те малта пыракансене хавхалантарма кирлĕ пек туса пымалла. Пирĕн колхозра кашни бригада хăйĕн участокĕнчи тырра уйрăм пуçтарса кĕртет. Ĕçкунĕшĕн тивекен тупăша валеçнĕ чух та хăш бригада мĕн чухлĕ тырă туса илнине шута илеççĕ. Планпа палăртнинчен тухăçлăрах тырпул туса илнĕ пулсан, хушса тÿлеççĕ. Çапла вара бригадăри кашни çын хăй ĕçлекен участокран тырă ытларах туса илме тăрăшать.

Ĕçшĕн тĕрĕс тÿлени колхозниксене хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Тупăш валеçнĕ чухне вĕсем хăйсем ăмăртса ĕçленин результачĕ курса хаклаççĕ. М. Федорова свинарка хăйĕн ĕçне малтан кăмăлласах каймасчĕ. Ăмăртса ĕçлеме пуçласан, вăл сысна ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ирттерсе тултарчĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна колхоз хушса тÿлерĕ. Çакăн хыççăн унăн фермăра ĕçлес кăмăлĕ ÿсрĕ.

Малта пыракансем пире хăйсен ĕçĕпе, критиклесе колхоз производствине мĕнле ертсе пымаллине кăтартса параççĕ. Парти организацийĕ, вĕсен ĕçĕнчи мĕнпур паха енсене пĕтĕçтерсе, халăх хушшинче анлăн сарма тăрăшать. Çапла эпир ăмăртура кая юлакансене малтисемпе тан тăрса кĕрешме вĕрентсе пыратпăр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланнă колхозниксем кăçал кашни гектартан 20-шер центнер тĕштырă туса илессишĕн ăмăртаççĕ. Эпир вăл задачăна пурнăçлама кирлĕ условисене хатĕрлеме тытăннă ĕнтĕ. Вăрлăхсене кĕркуннех лайăх сортланă, акма юрăхлă тунă. Çак кунсенче 400 тонна минераллă удобрени кÿрсе килтĕмĕр. Кашни кун хире тислĕк кăларатпăр. Халĕ тислĕке, ĕлĕкхи пек, хире саласа пăрахса, çил çинче типĕтсе вырттармастпăр, пĕр çĕре купаласа çĕртетпĕр. Мĕншĕн тесен, агротехника кăтартнă пек çĕртнĕ тислĕкре кăна тырпула ÿсме кирлĕ апат нумай пулать. Çĕрĕç хатĕрĕсемпе лаша таврашĕсене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ. Лашасем мăнтăр. Колхозниксем висĕ çуллăх курсра тата кружокра малта пыракан агротехникăна вĕренеççĕ. Вăрлăх яровизацилекенсене вĕрентсе хатĕрленĕ тата яровизацилемелли вырăнсем тунă.

Иртнĕ çулсенче эпир хĕреслĕ майпа акма тăрăшаттăмăр. Кăçал мĕнпур тырпула ансăр ретлĕ сеялкăпа акса хăваратпăр. Пусă çаврăнăшне йĕркелесе çитернĕ. Пур уйсенче те нумай çул ÿсекен курăк акса илнĕ хыççăн тăпра кĕрпеклĕхĕ нумай аванланчĕ.

Эпир хамăр умра тăракан задачăна ăнăçлă пурнăçласса чăререн шанса ĕçлетпĕр тата ăна пурнăçлатпăр та.

С. И. ГАЛКИН,
Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри парторганизаци секретарĕн заместителĕ.

Çуллахи строительство сезонне хатĕрленсе

КАНАШ. Çак кунсенче колхозсенчи строительство бригадисен бригадирĕсен висĕ кунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Семинарта пулнисем колхозсенче строительство ĕçне анлăн сарса ярасси çинчен, вырăнти строительство материалĕсемпе—саман кирпĕчĕпе, шлакпа строительствăра ытларах усă курасси çинчен сÿтсе яврĕç.

Кăçал колхозсенче пурĕ 180 лаша, 400 ĕне, 500 пăру, 900 сысна, 750 сурăх тата кайăк-кĕшĕк валли çĕнĕ витесем, 900 тонна вырнаçмалăх силос башнисем туса лартмалла. Фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилесе çитермелле. «Красный Октябрь» тата «Красное пламя», «Красная Армия» колхозсенче шыв парассине механизацилеççĕ. Кашни колхозрах кормозапарниксем, кормокухньăсем тата ытти машинăсем лартса, вĕсемпе туллин усă курма тытăнаççĕ. Çав ĕçсене тума районти колхозсенче 700 пинрен кая мар саман кирпĕч туса хатĕрлемелле, 750 кубометртан кая мар чул кăлармалла.

Кăçал «Комбайн» колхозра саманран чăх вити, Шверник ячĕпе тăракан колхозра шлакпа цементран ĕне вити тума тытăнаççĕ. Çавăн пекех ытти чылай колхозсенче те вырăнти строительство материалĕсенчен выльăх-чĕрлĕх витисем тума палăртнă.

Семинарта пулнисем районти колхозсенче строительство ĕçĕсем вăраххăн пынине, строительство бригадисене кирлĕ пек йĕркелеменнине палăртрĕç.

Колхозсенче строительствăра ĕçлеме кадрсем хатĕрлесси çителĕксĕр пулса пырать. Бригадăсенче ватă колхозниксем кăна ĕçлеççĕ. Çамрăксене вĕрентес ĕç çине кирлĕ пек пăхмаççĕ.

Семинарта пулнисем колхозсенче строительство ĕçне вăйлатса, çитменлĕхсене пĕтерме пулчĕç. **И. КУЗЬМИН.**

Вырӑнти ресурссемпе лайӑхрах усӑ курмалла

Ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен иртнӗ суйлавӗ вӑхӑтӗнче суйлавҫӑсем Советсен ӗҫӗсем ҫинчен активлӑ сӳтсе яврӗҫ, ҫитменлӗхсене хӑюллӑн критиклерӗҫ. Ҫавӑнпа пӗрлех вӗсем вырӑнти Советсене наказсемпе сӗнӳсем нумай пачӗҫ.

Пирӗн районти суйлавҫӑсем район Советне тата ял Совечӗсене панӑ наказсенчен пӗри вӑл вырӑнти ресурссемпе ытларах усӑ курмалла тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлеме хушни пулать. Вӗсемпе тӗрӗс тата тулли усӑ курнипе халӑхӑн пурнӑҫпа йӑлари ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене лайӑхрах тивӗҫтерме май килет. Вырӑнти ресурссенчен предприятисемпе колхозсене кирлӗ япаласем, строительство материалӗсем, топливо, халӑха кулленхи пурнӑҫра кирлӗ таварсем нумай туса кӑларма май пур. Ку япаласемпе таварсене вырӑнтах хатӗрлени предприятисемпе колхозсене ҫавсене урӑх ҫӗртен илсе килме укҫа-тенкӗ тӑкаклассинчен хӑтарать.

Пирӗн районта строительство материалӗсем тумалли чӗртавар (йывӑҫ, тӑм), Ишлейпе Шуркасси патӗнчи улӑхсенче торфлӑ вырӑнсем пур. Юлашки ҫулсенче районти предприятисемпе промысла артелӗсем ҫав чӗртаварпа усӑ курас тӗлӗшпе чылай ӗҫсем туса ирттерчӗҫ. Сӑмахран, районти торфопредприяти темиҫе пин тонна торф кӑларчӗ, ӑна учрежденисене тата халӑха сутрӗ. Ҫакӑ вара ҫулталӑк хушшинче пиншер кубометр вутӑ перекетлеме май пачӗ. Промысла артелӗсем вырӑнти материалсенчен сӗтел-пукансем, корзинкӑсем тӑваҫҫӗ, кирпӗч, известь, урапа маҫӗ туса кӑлараҫҫӗ. Районти колхозсем иртнӗ ҫулта чи малтанхи хут тӑма хӑйӑрпа тата улӑмпа хутӑштарса саман кирпӗчӗсем туса хатӗрлерӗҫ, ҫав кирпӗчсенчен вуннӑ витӗ ытла туса лартрӗҫ. Ку витесене йывӑҫран тунӑ пулсан, вӗсене лартма строительствӑна юрӑхлӑ йывӑҫ виҫӗ пин кубометр ытла кирлӗ пулатчӗ.

Райсовет исполкомӗпе ял Совечӗсем вырӑнти ресурссене тупса палӑртас тата вӗсемпе усӑ курас ӗҫре промышленность предприятийӗсемпе промысла артелӗсене яланах пулӑшаҫҫӗ. Вырӑнта мӗнле ресурссем пуррине, вӗсенчен мӗнле япаласем тума май пуррине суйлавҫӑсем те кӑтартса параҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, Энтимӗркассипе Тӑрӑн ял Совечӗсенчи суйлавҫӑсем хӑйсен пухӑвӗсенче Энтимӗркасси улӑхӗнче торфлӑ вырӑнсем пурри ҫинчен, ҫав торфа кӑларас ӗҫе организацилеме кирли ҫинчен каларӗҫ. Ишлей-Покровски ял Советӗнчи суйлавҫӑсем ял Совет территорийӗнчи улӑхра торф кӑларас ӗҫе анлӑ сарас пирки ыйту хускатрӗҫ. Суйлавҫӑсем промысла артелӗсемпе райпромкомбинат ҫумӗнче кирпӗч производстви, столярнӑй мастерскойсем, катка-пичке тӑвас ӗҫе организацилеме наказсем пачӗҫ.

Райсовет исполкомӗ суйлавҫӑсем вырӑнти ресурссемпе усӑ курас пирки панӑ наказсене пухса пӗтӗҫтерчӗ, вӗсем ҫинчен сӳтсе яврӗ, кӑҫалхи ҫуркуннерен торф кӑларас ӗҫе йӗркелеме, ҫу каҫиччен торф нумай кӑларттарма палӑртрӗ. Торф кӑларни районти учрежденисемпе халӑх валли топливо парас ӗҫе чылай ҫӑмӑллатать. 1953 ҫулта промысла артельсем иртнӗ ҫулхинчен нумайрах кирпӗч туса кӑлармалла, промкомбинат ҫумӗнче кирпӗч тӑвас ӗҫе йӗркелемелле. Район территорийӗнче хӑва вӗтлӗхӗсем пур. Ҫав вӗтлӗхсенчи хӑваран тӗрлӗ корзинкӑсемпе сӗтел-пукан тӑвас ӗҫе вӑйлатас пулать.

Пирӗн районта чӑпта ҫапакан промысла артелӗсем нумай. Вӗсем валли курӑс инҫетрен кӳрсе килме тивет. Ҫав артельсен членӗсем хӗллехи вӑхӑтра ҫеҫ чӑпта ҫапаҫҫӗ, ытти чухне вара урӑх производствӑсенче ӗҫлеҫҫӗ, нумайӑшӗ колхоз ӗҫне хутшӑнассӗ. Ҫапла вара артель пӗр вӑхӑта пӗтӗмпех саланса каять, унӑн правленийӗ ҫеҫ тӑрса юлать. Кӗркунне ҫитсен правлени артель членӗсене ҫӗнӗрен ӗҫе хутшӑнтарас тӗлӗшпе нумай тӑрӑшма тивӗт. Курӑс ҫулталӑкӗпе ӗҫлемелӗх хатӗрлесен, артель тӑтӑшах чӑпта ҫапас ӗҫе те йӗркелеме пултарать. Анчах халичченхи практикӑра ҫав артельсем ҫулталӑкӗпех чӑпта ҫапни пулман-ха.

Артельсен ӗҫ вӑйӗпе ҫулталӑкӗпех усӑ курма Чӑваштарпромсоюз системине кӗрекен артельсенче ҫӗнӗ производствӑсем тума кирлӗ. Ку артельсенчен нумайӑшӗнче кирпӗч ҫапса хӗртес, катка-пичке тӑвас ӗҫсене ҫӑмӑллӑнах организацилеме май пур, ун валли вырӑнтах чӗртавар ҫителӗклӗ тупӑнать. Кунсӑр пуҫне, ҫав япаласем районти предприятисене, колхозсене тата халӑха нумай кирлӗ. Ҫакна шута илсе, райсовет исполкомӗ чӑпта ҫапакан тата хӑваран сӗтел-пукан тӑвакан артельсенче ҫӗнӗ производствӑсем йӗркелес ыйтӑва темиҫе хутчен те хускатрӗ, хӑйӗн сӗнӗвӗсем ҫинчен Чӑваштарпромсоюза пӗлтерчӗ. Чӑваштарпромсоюз ҫӗнӗ производствӑсем тӑвас пирки ытларах интересленсен, асӑннӑ материалсемпе япаласем туса кӑларас ӗҫе кӗске вӑхӑт хушшинчех йӗркелесе яма май килӗччӗ.

Пирӗн райпромкомбинат ҫумӗнче кирпӗч тӑвас ӗҫе йӗркелеме пур условисем те ҫителӗклӗ. Райсовет исполкомӗ иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ республикӑн Вырӑнти промышленность министерствинчен промкомбинат ҫумӗнче кирпӗч тӑвас ӗҫе организацилеме техника енӗпе тата укҫа-тенкӗ парса пулӑшма ыйтать. Анчах Вырӑнти промышленность министерстви пире ҫак ӗҫре пулӑшасшӑн мар.

Ҫак тӗслӗхсем республикӑн Вырӑнти промышленность министерствипе Чӑваштарпромсоюз руководителӗсем райсовет исполкомӗн пуҫарӑвӗсем ҫине ҫиелтен пӑхни ҫинчен калаҫҫӗ. Вӗсем пирӗн райпромкомбинатпа промысла артелӗсен ӗҫӗсене йӗркелеме райсовет исполкомне пулӑшманни ҫинчен эпӗ Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн виҫҫӗмӗш сессийӗнче те каласа панӑччӗ. Анчах унтанпа нимӗнле улшӑну та пулмарӗ. Ҫав министерствӑпа союз руководителӗсем вырӑнти ресурссемпе усӑ курас ӗҫе тивӗҫлӗ хак парсан, ку енӗпе ытларах тӑрӑшсан, районта строительство материалӗсемпе халӑха кулленхи кирлӗ япаласем туса кӑларас ӗҫсене тата ытларах аталантарма пулать. Вӗсен ку енӗпе ҫаврӑнӑҫуллӑрах ӗҫлемелле, райсовет исполкомӗ хускатнӑ ыйтусене хӑвӑртрах татса памалла.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ сталинла пиллӗкмӗш пиллӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсенче вырӑнти промышленноҫпа промысла коопераци продукци туса кӑларассине пиллӗк ҫул хушшинче 60 процента яхӑн ӳстермелли ҫинчен каланӑ. Ҫак задачӑна пурнӑҫлама районсемпе хула Совечӗсен вырӑнти промышленноҫпа промысла артелӗсене ертсе пырас ӗҫе татӑклӑнах лайӑхлатас пулать. Районти предприятисемпе промысла артелӗсенче вырӑнти ресурссемпе усӑ курас ӗҫе лайӑхлатмалла, вӗсен колхозсем валли кирлӗ строительство материалӗсене тата ытти япаласене ҫителӗклӗ туса памалла, ҫапла тунипе колхозсем хӑйсен тӗп задачине— мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерес, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх йышне нумайлатнипе пӗрлех унӑн тухӑҫлӑхне чылай ӳстерес задачӑна пурнӑҫлас енӗпе ытларах ӗҫлеме пултарччӑр.

П. НИКОЛАЕВ,
Ишлей райсовет исполкомӗн председателӗ.

„Коммунизм ялавӗ" хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн

„Иванова тунчӗ, райком ӗненчӗ"

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатра иртнӗ ҫулхи октябрӗн 26-мӗшӗнче «Иванова тунчӗ, райком ӗненчӗ» ятлӑ статья пичетленсе тухнӑччӗ. Статьяра Сӗмӗрле хулинчи тумтир ҫӗлекен мастерской директорӗ Т. Иванова тивӗҫсӗр ӗҫленине, мастерскойри работниксем хушшинче ҫемьелӗхпе туслӑх пулса тӑнине, ҫакна май кунта совет законӗсене пӑсса ӗҫленине кӑтартса паначчӗ.

Статьяра ҫавӑн пекех Иванова ҫинчен КПСС Сӗмӗрле райкомӗн бюровӗнче ятарласа сӳтсе явни, унӑн ҫитменлӗхӗсем паллӑ пулин те, бюро ҫемҫе решени йышӑнни, Чӑваш АССР Вырӑнти промышленность министерстви мастерской ӗҫне тивӗҫлипе тӗрӗслесе тӑманни ҫинчен ҫырнӑччӗ.

КПСС Чӑваш обкомӗн бюровӗ Сӗмӗрлери тумтир ҫӗлекен мастерской директорӗ, КПСС членӗ Иванова ҫинчен ҫырнӑ жалобӑна тата «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра пичетленнӗ «Иванова тунчӗ, райком ӗненчӗ» ятлӑ статьяна сӳтсе яврӗ.

КПСС обкомӗн бюровӗ Сӗмӗрлери тумтир ҫӗлекен мастерской ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсем ҫинчен, мастерской директорӗ Иванова тивӗҫсӗр ӗҫлени ҫинчен статьяра тӗрӗс ҫырнине палӑртрӗ, КПСС Сӗмӗрле райкомӗ Иванова ҫинчен 1952 ҫулхи августӑн 19-мӗшӗнче йышӑннӑ решение пӑрахӑҫа кӑларса, КПСС членне Т. Я. Иванова юлташа службӑра тӑнипе усӑ курса тивӗҫсӗр ӗҫсем тунӑшӑн, укҫа-тенкӗ дисциплинине пӑснӑшӑн, мастерской хуҫалӑхне кирлӗ пек тытса пыманшӑн хытӑ ятларӗ, тумтир ҫӗлекен мастерской директорӗнчен кӑлармалла турӗ.

Парти обкомӗн бюровӗ Чӑваш АССР Вырӑнти промышленность министрне Бобров юлташа вӑл мастерскойӗнче ҫирӗп йӗрке тӑвассишӗн вӑхӑтра кирлӗ мерӑсем йышӑнманнине кӑтартса пачӗ.

Обком бюровӗ «Иванова тунчӗ, райком ӗненчӗ» ятлӑ статьяра КПСС Сӗмӗрле райкомӗн секретарӗ Федорова юлташ ҫинчен тӗрӗс ҫырманнине, Федорова юлташ Ивановӑна хӳтӗлет тата хӑйӗн службири вырӑнӗпе усӑ курса тивӗҫсӗр ӗҫсем тӑвать тесе, тивӗҫсӗр айӑпланине палӑртрӗ.

„Усламҫу та пыра ларать"

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатра мартӑн 3-мӗшӗнче «Усламҫу та пыра ларать» ятлӑ фельетон пичетленсе тухнӑччӗ. Чкаловски районӗн прокурорӗ Чкаловскинчи ҫу завочӗн мастерӗ пулнӑ А. Ф. Петрянинӑна СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ 1947 ҫулта июнӗн 4-мӗшӗнче йышӑннӑ Указ тӑрӑх уголовнӑй йӗркепе ответ тыттармалла туни, районти маслопром управляющийӗ Лебедев ҫинчен КПСС райкомӗн бюровӗнче сӳтсе явни, парти райкомӗн бюровӗ ӑна управляющи ӗҫӗнче хӑварма май ҫуккине палӑртни ҫинчен пӗлтерчӗ.

* * *

Чӑваш АССР прокурорӗ «Усламҫу та пыра ларать» ятлӑ фельетонра асӑннӑ фактсем тӗрӗс пулни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫак фельетона ятарласа сӳтсе явнӑ, «Маслопром» трестӗн управляющине Кузнецов юлташа вӑл кадрсене суйласа илесси ҫине ҫиелтен пӑхнине кӑтартса панӑ, малашне работниксем суйласа илессине тата ревизи ӗҫне лайӑхлатма, растратӑсем тӑвассине хирӗҫ кӗрешме хушнӑ.

Вырӑс халӑхӗн аслӑ драматургӗ-патриочӗ

(А. Н. Островский ҫуралнӑранпа 130 ҫул ҫитнӗ май)

Аслӑ драматургӑн — Александр Николаевич Островскийӑн (1823—1886 ҫ. ҫ.) творчестви 1847 ҫултан пуҫласа 1886 ҫула ҫитиччен аталанса сарӑлса пынӑ. Ҫав ҫулсенче пирӗн ҫӗршывра паллӑ ӗҫсем пулса иртнӗ.

Тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чун-чӗререн юратни Островские хӑйӗн вӑхӑтӗнчи крепостникла-буржуалла строя йӗркесӗрлӗхне витӗр курса тӑма пулӑшнӑ. Драматург сатирӑн вӑйлӑ хӗҫпӑшалӗпе пусмӑр тӗнчи ҫине, пусмӑрҫӑсем ҫине хӑюллӑн тапӑннӑ, вӗсен тискер те сутӑнчӑкла ӗҫсене хытӑ питленӗ. Ҫапла ӗҫлени Островские чуралӑхра пурӑнакан халӑха хӳтӗлекен революциллӗ демократсен — Чернышевский, Некрасов, Добролюбов ертсе пыракан демократсен ретне тӑма пулӑшнӑ.

Хӑйӗн ӗмӗрӗнче Островский 50 пьесӑна яхӑн ҫырнӑ, пурнӑҫа питӗ тарӑн та питӗ тӗплӗн кӑтартса панӑ. Вӑл помещикла-буржуалла строя ҫав тери хаяррӑн питленӗ, ӑна тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. «Пурнӑҫри киревсӗрлӗхе питлесси, ӑна тӑрӑ шыв ҫине кӑларасси — вырӑс характерӗн тӗп енӗ... Пирӗн литературӑн тӗп юхӑмӗ вӑл—пурнӑҫри киревсӗрлӗхе питлесси пулса тӑрать», тесе ҫырнӑ Островский.

Аслӑ драматург «тӗттӗм патшалӑхӑн» хура чаршавне сирсе пӑрахнӑ, ҫынсене сутса, улталаса, выльӑх вырӑнне хурса пурӑнакан пусмӑр тӗнчин хуҫисене, каҫарусӑр судья пек, айӑпланӑ. Островский ҫав вӑхӑтрах хӑйӗн пьесисенче «тӗттӗм патшалӑхӑн» мӑшкӑлӗ пулнӑ ырӑ та аслӑ, талантлӑ та таса чун-чӗреллӗ ҫынсене хӗрхенсе, ырласа кӑтартнӑ.

Островский пьесисенче пирӗн умма халӑха ҫаратса, асаплантарса, унӑн таса чунне пӑсма хӑтланса пурӑннӑ сӗлӗхсен хӑрушӑ тӗнчи тухса тӑрать. Чаплӑ художник-реалист Островский тискер Дикойпа Кабанов самодурсен («Тӑвӑл» пьеса), ҫын шурлӑхне ҫаратса пуйнӑ купцасен — Прибытковӑн («Юлашки парне» пьеса), Беркутовӑн («Кашкӑрсемпе сурӑхсем» пьеса), Паратовӑн («Парнесӗр хӗр» пьеса), икӗ питлӗ карьерист Глумовӑн («Чее ҫыннӑн та айванлӑх пур» пьеса), йӑпӑлти чиновник Юсовӑн («Тухӑҫлӑ вырӑн» пьеса), юхӑнчӑка тухса пыракан Гурмыжская дворянкӑн («Вӑрман» пьеса) тата пурнӑҫа варалаcа пурӑнакан ытти пусмӑрҫӑсен сӑнарӗсене кӑтартса панӑ.

Ҫак «тӗттӗм патшалӑхӑн» представителӗсене патриот-драматургӑн пьесисенче тӳрӗ пурнӑҫпа пурӑнакан ҫынсем хирӗҫ тӑраҫҫӗ, вӗсем хӑйсен телейӗшӗн кӗрешеҫҫӗ, тискер те хаяр пурнӑҫпа пӗр самантлӑха та килӗшмеҫҫӗ.

Аслӑ критик Добролюбов «Тӑвӑл» ятлӑ пьесӑри Катерина героиньӑна «тӗттӗм патшалӑхри хӑйӑ ҫути» тесе каланӑ. Ҫак хӑюллӑ та таса чун-чӗреллӗ хӗрарӑм дикойсемпе прибытковсен тискер тӗнчине хирӗҫ харсӑррӑн тӑрать, суя та усал вӑконсене пула тытӑнса тӑракан эксплуататорсен обществине пӗтӗм чунӗпе кураймасть. «Тӑвӑл» драма Островский творчествинче чи чаплӑ реализмла произведени пулса тӑрать, вӑл тӗнчӗмӗшне тӗттӗмлӗхе, ҫынна ҫын пусмӑрланине вирлӗн пырса ҫапать.



Ун чухнехи саманари йӗркесене хирӗҫ тӑракан, телейлӗ пурнӑҫшӑн кӗрешекен ырӑ вырӑс ҫыннисене Островский хӑйӗн ытти пьесисенче те нумай сӑнласа кӑтартнӑ. «Кашни кашӑках аш турамӗ лекмест» пьесӑри Агния хӑйӗн таса ятне, ҫын тивӗҫне упрассишӗн хӑюллӑн кӗрешет; «Айӑпсӑр айӑплисем» пьесӑри Кручинина хӑйӗн юратнӑ ҫыннине пӑрахса, улталаса кайнӑ хыҫҫӑн чӑн пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑрать, хӑйӗн вӑйӗ ҫине шанма тытӑнать. «Вӑрман» пьесӑри Геннадий Несчастливцев трагик, пӗчӗк хуласенчи театрсенче выляса ҫӳрекенскер, хӑйне тивӗҫлӗ укҫана чухӑн та телейсӗр хӗре пиллесе парать. Аслӑ драматургӑн пьесисенчи тӳрӗ чунлӑ вырӑс ҫыннисем хӑй тӗллӗн вӗренсе чаплӑ механик пулнӑ Кулигина, ҫутталла туртӑнакан Митя приказчика, ҫынсен ырлӑхӗшӗн тӑрӑшакан Жадов чиновника пур енчен те пулӑшаҫҫӗ, ырӑ канашсем параҫҫӗ. «Айӑпсӑр айӑплисем» пьесӑри Незнамов помещикла-буржуалла общество ҫине кӳренсе, тарӑхса пӑхать. Вӑл хӑйӗн чунӗ тӑтӑшах ыратни ҫинчен, кирек ӑҫта та инкеклӗ хурлӑх курни ҫинчен каласа парать. 1870 ҫулсенчи демократсен-разночинецсен сӑнарне пӗтӗҫтерсе тӑракан Мелузов чухӑн студент дворянсемпе чиновниксене куҫ умӗнчех ылханать. «Эпир сирӗнпеле яланах дуэльре, яланах пӗрне-пӗри хирӗҫ тӑрса кӗрешетпӗр. Эпӗ ҫынсене вӗрентме тӑрӑшатӑп, эсир вӗсене пӑсма ҫеҫ тӑрӑшатӑр», тет вӑл.

Островскин патриотизмла творчествинче «Козьма Захарыч Минин-Сухорук» ятлӑ хроникӑллӑ драма пысӑк вырӑн йышӑнать. Ӑна 1862 ҫулта революциллӗ демократин органӗ пулса тӑракан «Современник» журналта пичетленӗ. Ҫак драмӑна цензорсем сцена ҫинче лартса кӑтартма ирӗк памасӑр нумай вӑхӑт хушши тытса усранӑ. Драма вырӑс халӑхӗн никам ҫӗнеймен вӑйне, унӑн патриотизмне, вӑл яланах кӗрешӳве хатӗр тӑнине кӑтартса парать. Козьма Мининӑн аслӑ сӑнарӗнче Островский хамӑр ҫӗршывӑн ҫутӑ пуласлӑхне, унӑн телейне курса тӑнӑ.

«Нациллӗ театр вӑл, — тесе ҫырнӑ Островский, — академисем, университетсем, музейсем пекех, халӑх ӳссе ҫитнинне кӑтартса парать». Хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне, вилӗмсӗр талантне вӑл ҫав нациллӗ театра тӑвас ӗҫе панӑ. 1882 ҫулта аслӑ драматург патне Гончаров акӑ мӗн ҫырнӑ: «Эсир Фонвизин, Грибоедов, Гоголь хурса хӑварнӑ никӗс ҫинче ҫӗкленекен чаплӑ ҫурта туса пӗтертӗр. Сирӗн хыҫҫӑн тин эпир, вырӑс ҫыннисем, пирӗн хамӑрӑн нациллӗ театр пур, тесе мухтанма пултаратпӑр. Ӑна чӑннипех те Островский театрӗ тесе каламалла».

Островский театрӗпе вырӑссен сцена искусстви, вырӑс актерӗсен ӑсталӑхӗ питӗ ҫирӗп ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Унӑн пьесисенчи рольсене Пров, Михаил, Ольга Садовскисем, М. Ермолова, А. Ленский тата ытти чаплӑ артистсем те вылянӑ. Островскин драматургине пур енчен те тарӑн та анлӑн кӑтартса пыракан вӑл Мускаври Пӗчӗк театр пулса тӑрать. Ҫав театр хӑй ӗҫлеме тытӑннӑранпа 125 ҫул тултарнине 1949 ҫулти октябрь уйӑхӗнче уявласа ирттерчӗ. Аслӑ драматургӑн творчестви Украинӑри, Белоруссири, Арменири, Азербайджанри драматургие аталантарма та хытӑ пулӑшрӗ.

Островский пьесисене совет сцени ҫинче тӑтӑшах кӑтартаҫҫӗ, вӗсене Тӑван ҫӗршыври халӑхсен чӗлхи ҫине куҫарнӑ, вӗсене нумай миллион ҫынсем юратса, хумханса пӑхаҫҫӗ. Халӗ драматургӑн произведенийӗсене ирӗклӗ Китайра та, халӑх демократи ҫӗршывӗсенче те кӑтартаҫҫӗ.

Островскин вилӗмсӗр искусстви, унӑн ҫивӗч сатири пирӗн кунсенче ҫӗнелле, урӑхла янӑрать. Патриот-драматург ҫырса кӑтартнӑ сӑнарсем капитализмла ҫӗршывсенчи, уйрӑммӑнах империализмла Америкӑри «тӗттӗм патшалӑх» самодурӗсене питлеме хытӑ пулӑшаҫҫӗ. Пусмӑрлаха, ҫынна ҫын курайманнине, капитал тӗнчине пырса ҫапакан А. Н. Островскин творчестви тӗнчери мирлӗ ҫынсене ирӗклӗхшӗн, миршӗн, телейшӗн кӗрешме чӗнет.

Н. ВЛАДИМИРОВ.

А. Н. Островский пьесисем чӑвашла

Чӑвашсен совет саманинче пуҫланса кайнӑ театр искусствине ӳссе аталанма вырӑссен аслӑ драматургӗн А. Н. Островскин творчестви те пысӑк пулӑшу панӑ. Чӑваш государство академи театрӗн чи малтанхи постановки А. Н. Островскин «Пурӑнас килнӗ пек ан пурӑн» ятлӑ пьеси пулнӑ.

35 ҫул хушшинче чӑваш театрӗсен сценисем ҫинче А. Н. Островскин 15 пьесине чӑвашла куҫарса лартса панӑ. Вӑл шутра: «Ҫуклӑх—кӑлтӑк мар», «Ют ҫуна ҫине ан лар», «Ҫӳр пус та ҫукчӗ—сасартӑк виҫӗ пус», «Тӑвӑл», «Василиса Мелентьева», «Белугин авланни», «Вӑрман», «Кашни кашӑках аш турамӗ лекмест», «Бальзаминов авланни», «Шухӑ вырӑнта», «Парнесӗр хӗр», «Хамӑр ҫынсем—саплашӑпӑр», «Усрав хӗр», «Кашкӑрсемпе сурӑхсем», «Телейлӗ кун». Ҫак пьесӑсене чӑвашла Максимо-Кошкинский, А. Кӑлкан, Л. Агаков, Н. Айзман, М. Ухсай, ҫавӑн пекех К. Иванов, Тани-Юн, У. Тимофеева тата ыттисем те куҫарнӑ.

А. Н. Островскин чӑвашла куҫарнӑ пьесисенчен нумайӑшне чӑвашсен государство издательстви уйрӑм кӗнеке туса е «Илемлӗ литература» (каярахпа «Тӑван Атӑл») альманахра пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл шутра: «Ҫӳр пус та ҫукчӗ—сасартӑк виҫӗ пус», «Айӑпсӑр айӑплисем», «Вӑрман», «Шухӑ вырӑнта», «Василиса Мелентьева», «Тӑвӑл», «Парнесӗр хӗр», «Ӳсрав хӗр» тата ыттисем те.

Чӑвашсен государство издательстви А. Н. Островскин чӑвашла куҫарнӑ пьесисене 1954 ҫулта пӗр том туса пичетлесе кӑларма палӑртнӑ.

Шкул директорӗ тата педагогсен коллективӗ

Сталин юлташ «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем» ятлӑ гениллӗ произведенире коммунизм строительствин аслӑ программине палӑртса пачӗ. Коммунизма куҫма малтанлӑха кирлӗ условисенчен пӗри ҫакӑ пулать, терӗ Сталин юлташ: «...общество культурине чи ҫӳлӗ шая ҫити ӳстермелле, вӑл обществӑн мӗнпур членӗсене вӑй-халпа ӑстӑн тӗлӗшӗнчи пултарулӑхсене пур енӗпе те аталантарма май патӑр, общество членӗсем общество аталанӑвӗн активлӑ деятелӗсем пулмашкӑн ҫителӗклӗ таран вӗренме пултарччӑр, вӗсем ирӗклӗн професси суйласа илме пултарччӑр, ҫапла вара вӗсен, ӗҫлев пайланса тӑнипе пула, ӗмӗр тӑршшӗпех пӗр-пӗр профессипе ҫыхӑнса тӑмалла ан пултӑр».

Сталин юлташ кӑтартса панӑ тӑрӑх партин XIX-мӗш съезчӗ шкул умне ҫакӑн пек задача лартрӗ: «Пӳр енӗпе те пӗлӳ паракан шкулӑн социализмла воспитани парас ӗҫне малалла лайӑхлатас тата вӑтам шкултан вӗренсе тухакансене професси суйласа илме условисем туса парас тесе, вӑтам шкулта политехникӑлла вӗренӗве пурнӑҫлама тытӑнмалла тата пур ҫӗрте те политехникӑлла вӗренӗве куҫма кирлӗ ӗҫсем туса ирттермелле».

Партин XIX-мӗш съезчӗ ҫамрӑк ӑрӑва воспитани парса, вӗрентсе ӳстерес тӗлӗшпе панӑ директивӑсене пурнӑҫа кӗртес тесен, чи малтан шкул ӗҫне лайӑх йӗркелесе пырать.

Шкул ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем педагогсен коллективӗпе шкул директорӗ мӗнле ӗҫленинчен нумай килеҫҫӗ. Шкул директорӗпе педагогсен коллективӗ умӗнче тӑракан чи пысӑк задача вӑл вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑх организацилесси, уроксене пысӑк шайра ирттересси, вӗрентӳпе воспитани меслечӗсене пӗрмаях лайӑхлатса пырасси пулать. Ҫавӑнпа та учителӗн хӑйӗн педагогика ӑсталӑхне пӗрмаях лайӑхлатса, хӑйӗн пӗлӗвӗсене, уйрӑмах политикӑллӑ пӗлӗвӗсене ӳстерсе пымалла, ачасене вӗрентсе воспитани памалли малта тӑракан меслетсене вӗренсе ҫитмелле. Ҫавӑн пек тума пирӗн ҫӗршывра условисем ҫителӗклӗ. Заочно вӗренме лайӑх майсем туса панӑ. Халӑха вӗрентес ӗҫӗн органӗсем тӗрлӗ курссем ирттереҫҫӗ. Ӗҫри квалификацине политикӑлла пӗлӳсене ӳстерес тӗлӗшпе харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлени тӗп вырӑнта тӑрать.

Шкулӑн пӗтӗм ӗҫне директор йӗркелесе пыма тивӗҫлӗ. Ӑна идеологи фронтӗнчи ответлӑ ӗҫе шанса панӑ. Унӑн вӗрентӳпе воспитани ӗҫне ертсе пырас пулать. Директорӑн шкулти пӗтӗм ӗҫе педагогика коллективӗ ҫине, партипе профсоюз организацийӗсем ҫине таянса туса пырас пулать. Пурне те вӑтам пӗлӳ парас тата политехникӑлла вӗрентме тытӑнас задачӑсене пурнӑҫласси шкул директорӗн ответлӑхне татах та ытларах ӳстерет.

Шкул директорӗ умне кулленхи ӗҫре тӗрлӗ ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ. Ҫав ыйтусене тӗрӗс татса парас тесен, директорӑн хӑйӗн идейӑпа политика тӗлӗшӗнчи пӗлӗвӗсене, педагогика ӑсталӑхне ӳстермелле, шкул ӗҫне лайӑх ертсе пыма пӗлмелле. Вӑл вӗренекенсемшӗн ҫеҫ мар, вӗрентекенсемшӗн те учитель пулма тивӗҫлӗ. Педагогсен коллективӗ пӗрлешни, пӗр паллӑ фигура тавра, педагогсен коллективӗн центрӗ—директор—тавра пӗрлешни кӑна вӗсене ответлӑха туйса тимлӗ ӗҫлекен воспитательсем пулма май парать, тесе ҫырнӑ А. С. Макаренко.

Директорӑн педагогсен коллективне тата вӗренекенсене хавхалантарса пымалла, вӗсене ӗҫе юратма вӗрентмелле. Педагогсен хушшинче критикӑпа самокритикӑна вӑйлатмалла, ҫакӑ педагогсен ӗҫри ответлӑхне ӳстерме, вӗрентӳпе воспитани ӗҫӗн пахалӑхне пур майсемпе те лайӑхлатма пулӑшать. Вӗренекенсене ҫирӗп те тарӑн пӗлӳ памалла, ачасем пӗр класра икӗ ҫула юлни пулмалла мар. Директорӑн учительсем хушшинче ӗҫ дисциплинине тата шкул ачисен дисциплинине ҫирӗплетес, класс тулашӗнчи тата шкул тулашӗнчи ӗҫсене лайӑхрах организацилес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлес пулать.

Пирӗн республикӑри нумай шкулсен директорӗсем педагогсен коллективне ертсе пырас тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Шупашкарти 22-мӗш вӑтам шкулӑн директорӗ Л. Алексеев юлташ—педагогика коллективне тата вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑх ертсе пыракан директорсенчен пӗри. Унӑн хӑйӗн ӗҫне кирлӗ пек йӗркелеме нумай тӑрӑшма тивнӗ. Ӑна ҫӗнӗ шкула ӗҫлеме янӑ. Ку шкула икӗ ҫул каялла ҫеҫ лартнӑ. Шкула уйчӗн хулари тӗрлӗ шкулсенче вӗреннӗ ачасем пухӑннӑ. Кашни ача хӑйне ыттисенчен ӑраснарах тыткаланӑ, урок вӑхӑтӗнче аташса ларакансем те, киле панӑ заданисене хатӗрлеменнисем те пулнӑ.

Вӗренекенсем хушшинче ҫирӗп дисциплина пулассишӗн учительсен коллективӗнчен килнине асра тытса, Алексеев юлташ учительсемпе ытларах ӗҫленӗ. Вӑл коллектива тачӑ пӗтӗҫтерме тӑрӑшнӑ, учительсен урок ирттерме мӗнле хатӗрленнине, ачасене шкулти йӗркесен правилисене ҫирӗп тытма мӗнле хӑнӑхтарса пынине тӑтӑшах тӗрӗсленӗ. Шкулта дежурнӑй пулма уйӑрнӑ ачасене вӗсен обязанноҫӗсем ҫинчен кашниччех хӑй каласа парать.

Алексеев юлташ вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсен комитечӗн ӗҫне йӗркелеме пулӑшать. Кунта шкул ачисен ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗсене час-часах ирттереҫҫӗ. Кашни класс руководителӗ вӗренекенсен ашшӗ-амӑшӗсемпе ҫыхӑну тытать, вӗсен пухӑвӗсене ирттерет, вӗсемпе вӗрентӳ ӗҫне лайӑхлатасси, дисциплинӑна ҫирӗплетесси ҫинчен час-часах канашлать.

Шкул ӗҫне ертсе пыма Алексеев юлташа шкулти пуҫламӑш парторганизацийӗпе профсоюз организацийӗ нумай пулӑшаҫҫӗ.

Шкул умӗнче тӑракан пысӑк ыйтусене Алексеев юлташ педагогика советӗнче пӑхса тухма лартать, пӗр-пӗр ӗҫ ҫинчен советра сӳтсе явмалла пулсан, ку ӗҫ мӗнле тӑнине тӗплӗн сӑнаса пӗлме учительсене хутшӑнтарать. Ыйтӑва педагогика советӗнче пӑхса тухас умӗн директор учительсен канашлӑвне ирттерет. Ҫапла туни кирек мӗнле ыйтӑва та тӗрӗс татса пама, учительсен коллективне ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме мобилизацилеме пулӑшать.

Сӑмахран, шкулта ҫакӑн пек ӗҫ пулса иртнӗ: ҫамрӑк учительницӑн Г. Рубинштейн юлташӑн малтанах ӗҫ ӑнман. Уйрӑмах VI-мӗш класри ачасем вӑл ирттерекен уроксенче шавласа ларнӑ. Ҫак вӗренӳ ҫулӗн пӗррӗмӗш чӗрӗкӗнче вӑл вӗрентекен тӗрлӗ классенчи 116 ачаран 22 ача ӗлкӗрсе пырайман. Ҫамрӑк учительницӑна пулӑшма кирли сисӗннӗ. Ҫакна шута илсе, шкул директорӗпе вӗренӳ пайӗн заведующийӗ тата учительсем Рубинштейн учительницӑн урокӗсене час-часах ҫӳренӗ, ӑна усӑллӑ канашсемпе кӑтартусем панӑ. Ҫавна пула виҫҫӗмӗш чӗрекре Рубинштейн юлташ вӗрентекен предметсем тӑрӑх ӗлкӗрсе пырайманнисен йышӗ сӳрри таран чакнӑ, вӗренекенсем хушшинче дисциплина ҫирӗпленнӗ.

Шӑхасан районӗнчи Анаткас Кипеч ялӗнчи шкул директорӗ Мересин юлташ иккӗмӗш ҫул кӑна ӗҫлет-ха. Шкул директорӗ учительсен коллективне организацилеме пултарнӑ, шкулта ҫирӗп йӗрке туса хунӑ. Шкул ӗҫӗ пӗрмаях лайӑхланса пырать.

Уйрӑм директорсем шкул ӗҫне начар ертсе пыраҫҫӗ, шкул умӗнче тӑракан задачӑсене татса пама педагогсен коллективне ҫителӗклӗ мобилизацилемеҫҫӗ. Шупашкарти 7-мӗш вӑтам шкул директорӗ П. Сребков юлташ педагогсен коллективӗнчен уйрӑлса кайнӑ, шкул ӗҫӗпе, вӗренекенсен организацийӗсен, ашшӗ-амӑшӗсен комитечӗн ӗҫӗсемпе сахал интересленет. Ҫак вӗренӳ ҫулӗн малтанхи чӗрӗкӗнче уроксен пахалӑхне педагогсен советӗнче пӗр хутчен те сӳтсе явман.

Хӑшпӗр директорсем хӑйсен ӗҫне ячӗшӗн ҫеҫ туса пыраҫҫӗ. Вӗсем учительсен урокӗсенче пулаҫҫӗ, анчах учительсен ҫитменлӗхӗсене кӑтартса памаҫҫӗ. Ун пек директорсем ответлӑха туйми пулаҫҫӗ, вӗренӳри ҫитменлӗхсемшӗн пӗтӗм айӑпа учительсемпе вӗренекенсем ҫине йӑвантараҫҫӗ.

Муркаш районӗнчи Кашмашри 7 ҫул вӗренмелли шкул директорӗ пулса ӗҫленӗ Н. Артемьев шкула вӗренме ҫӳремен ачасем ҫинчен юриех никама та пӗлтермен. Муркаш районӗнчи Йӳҫкассинчи вӑтам шкул директорӗ А. Александров критикӑна путарса пынӑ, шкул пурлӑхне салатса пӗтернӗ. Ҫавӑнпа та вӗсене шкулсене ертсе пырас ӗҫрен хӑтармалла пулчӗ.

Ҫакӑнта кӑтартса панӑ тӗслӗхсенчен хӑшпӗр шкул директорӗсем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе ертсе пыма пӗлменни курӑнать. Ку вара ҫакӑн пек вывод тӑвма илсе пырать: шкул директорӗсен ертсе пырас ӑсталӑха вӗренсе ҫитес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлес пулать, ӗҫ ҫине парти вӗрентнӗ пек пӑхмалла, ҫамрӑксемпе ачасене коммунизмла воспитани парас пирки партин панӑ кӑтартусене тимлӗн пурнӑҫласа пымалла.

Шкул директорӗ малта пыракан учительсен паха опытне тӗпчесе пӗлме, ӑна ытти учительсем хушшине сарма тивӗҫлӗ. Ачасене вӗрентес воспитани парас ӗҫри ҫитменлӗхсене вӑхӑтра палӑртса, директорӑн вӗсене ҫийӗнчех пӗтерме тӑрӑшас пулать. Критикӑпа самокритика педагогсен коллективне шкул ӗҫне кирлӗ пек йӗркелеме воспитани панине директорӑн яланах асра тытмалла. Ачасене вӗрентес ӗҫе ячӗшӗн ҫеҫ туса пынине хирӗҫ пӗтӗм коллективӑн ҫине тӑрса кӗрешмелле. Вӗренӳ программине пӗтӗмпех пурнӑҫласа пыма, вӗренме палӑртнӑ материала ачасене тӗплӗн ӑнлантарса пама, мӗн вӗреннине ҫӗнӗрен аса илтерме тӑрӑшас пулать.

Директорӑн педагогсен совечӗ, предметпа методика пӗрлешӗвӗсем, пухусем йышӑннӑ решенисемпе шкулти приказсем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла. Кашни учитель ӗҫне лайӑх пӗлмесен, директор педагогсен коллективне тӗрӗс ертсе пыма пултараймасть.

Учительсене педагогика ӑсталӑхне ӳстерме педагогсен совечӗ нумай пулӑшма пултарать.

Педагогсен совечӗ вӑл—коллективлӑ орган, унӑн шкулти вӗрентӳпе воспитани ӗҫне йӗркелесе пымалла. Педагогсен коллективне директор хӑй ертсе пырать, унӑн педагогсен совечӗн ӗҫне лайӑхлатма пур майсемпе те тӑрӑшас пулать. Педагогсен совечӗн ларӑвӗсенче вӗрентӳ ӗҫӗн кулленхи ыйтӑвӗсене сӳтсе явса, учительсене шкул умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама мобилизацилени кирлӗ. Учительсен лайӑх опытне пӗтӗҫтересе, ӑна пӗтӗм коллектив хушшине сарасси—педагогсен совечӗпе директор умӗнче тӑракан чи паха задача. Педагогсен совечӗн ӗҫне план тӑрӑх туса пымалла, унӑн кашни ларӑвне тӗплӗн хатӗрленсе ирттермелле. Учительсен ӗҫри квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе предметпа медотика пӗрлешӗвӗсем те пысӑк вырӑнта тӑраҫҫӗ. Вӗсем пуринчен ытла ҫамрӑк учительсене нумай пулӑшма пултараҫҫӗ. Ҫамрӑк учительсен ҫитменлӗхӗсене кӑтартса панипе пӗрлех, вӗсене ҫав ҫитменлӗхсене пӗтерме вӗрентни кирлӗ.

Халӑха вӗрентес ӗҫ органӗсен шкул директорӗсене воспитани парас ӗҫе лайӑхлатас пулать, вӗсене шкула ертсе пырас ӗҫре кулленех пулӑшса пымалла.

Н. ИВАНОВ,
Чӑваш АССР Ҫутӗҫ министрӗн заместителӗ.

Корея ыйтăвĕ

Виçĕ çул хушши ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери общественность Корея ыйтăвĕ çине тимлĕ пăхать. Мĕнпур çĕршывсенчи общественноçĕн анлă сийĕсем хушшинче Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас туртăм ытларах та ытларах палăрса пырать. Ыйтăва мирлĕ майпа татса пани Корея халăхне, халĕ Китай халăх добровольцĕсем пулăшнипе хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлекен халăха, мирлĕ ĕçе тытăнма, Корея государствине пĕрлештерес тата унăн шалти ĕçĕсене йĕркелес ыйтăва хăйне кирлĕ пек татса пама май панă пулĕччĕ.

СССР правительстви Корейăра вăрçа чарса лартас тĕллевпе тăвакан пур ĕçсене те ырласа пулăшса пырать.

Çак ĕç Совет правительствин пуçлăхĕ И. В. Сталин Инди премьер-министрĕ Неру чĕнсе калани çине 1950 çулхи июль уйăхĕнче панă ответпа пуçланнă. Совет Союзĕн Хăрушсăрлăх Советĕнчи представителĕ 1951 çулхи июнь уйăхĕнче Нью-Йоркра тухса калани Корейăра перемири тăвасси çинчен калаçу пуçласа ямалли никĕс пулса тăчĕ.

Китайпа Корея делегачĕсем ырă кăмăллă пулнипе Кэсонра, унтан вара Паньмыньчжоньра нумай вăхăта пынă калаçусенче, тепĕр енĕн делегацийĕ калаçусене пĕр хут çеç мар чара-чара лартрĕ пулсан та, тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриаци тумалли ыйтусăр пуçне, перемири çинчен тăракан мĕнпур условисем пирки калаçса татăлнă.

Корейăри вăрçа чарса лартасси пĕтĕм тĕнчене интереслентерет. Унта пеме чарăнасси çинчен калаçса татăлнă пулнă: Корейăра перемири тăвасси çинчен йышăннă килĕшӳ çине алă пуснă хыççăн 12 сехет хушшинче вăрçă ĕçĕсене пĕтĕмпех чарса лартас тесе калаçса татăлнă.

Вăрçă вăрçакан икĕ енĕ те перемири тумалли тĕп условисем тăрăх: демаркаци линине палăртасси тата демилитаризаци зони туса хурасси çинчен; перемири çинчен тунă килĕшĕве пурнăçланине сăнаса тăрасси тата çак килĕшĕве пăснисене йĕркелесе ярасси çинчен; перемири тĕлĕшпе ĕçлекен çар комиссийĕ тата нейтральнăй çĕршывсен представителĕсенчен сăнаса тăракан комисси тăвасси çинчен; ятарласа сăнаса тата инспекци туса тăрас ĕçе организацилесси çинчен калаçса татăлнă.

Вăрçă вăрçакан икĕ енĕ те çакăн çинчен калаçса татăлнă: интересленекен çĕршывсен правительствисене перемири çинчен тунă килĕшӳ вăй илнĕ хыççăн виçĕ уйăх хушшинче икĕ енĕн аслăрах представителĕсен политикăлла конференцине пухма сĕнмелле. Вăл конференцин Корейăран мĕнпур ют çĕршывсен çарĕсене илсе тухасси çинчен, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелесси çинчен тата ытти ыйтусене калаçу ирттернипе йĕркелемелле.

Калаçу ирттерекенсем хушшинче килĕшсе татăлманни пурĕ те пĕр ыйту кăна — тыткăна илнĕ çар çыннисене улăштарса илесси çинчен тăракан ыйту кăна юлнă. Çавăнпа пĕтĕм тĕнчери халăхсен пысăк шанчăк пулнă, вĕсем çак ыйтăва та татса пама пулать, çапла вара Корейăра мир туса хума пулать, тесе ытларах та ытларах шанса тăма пуçларĕç. Анчах та ООН-ăн Корейăри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ генерал Кларк 1952 çулхи октябрь уйăхĕнче калаçусене чарса лартрĕ, çапла вара перемири тăвасси чарăнса ларчĕ.

Халĕ Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствисем, мир тума чĕререн тăрăшнипе, тепĕр хут хаклă пуçару турĕç. Çак пуçару Корейăра перемири çинчен тата вăрçа чарса лартасси çинчен килĕшӳ тума май парать.

Мартăн 28-мĕшĕнче Корея Халăх çарĕн Верховнăй командующийĕ Ким Ир Сен тата Китай халăх добровольцĕсен Командующийĕ Пын Дэ-хуэй тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çынсене улăштарса илес пирки Кларк генерал панă çыру çине ответлесе, Паньмыньчжоньра халех çак ыйту тăрăх калаçу пуçарса яма сĕнӳ пачĕç.

Çакăн хыççăн Китай Халăх Республикин Государство администраци совечĕн Премьерĕ тата Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕ Чжоу Энь-лай пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Ку пĕлтерĕве Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствисем пĕрле туса хатĕрленĕ. Çак пĕлтерӳре тыткăнри чирлĕ тата аманнă салтаксем пирки тăракан ыйтăва йĕркеллĕ татса панă хыççăн тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан пĕтĕм ыйтăва татса памалла тăвасси çинчен сĕнӳ кăларса тăратнă. Икĕ енĕн те Корейăра перемири тăвасси çинчен тăракан ыйтăва тӳрĕ кăмăлпа татса пама тăрăшмалла, тенĕ вăл пĕлтерӳре.

Чжоу Энь-лай икĕ правительство ячĕпе мĕнле татăклă сĕнӳсем панă-ха?

Тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриаци тумалли йĕркене 1949 çулта Женевăра йышăннă конвенципе палăртса хунă. Совет правительстви те, çавăн пекех тата Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствисем те çак конвенцие тĕрĕс тытса пымалла тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Анчах Паньмыньчжоньри калаçусем те, çак ыйтăва ООН-ра темиçе хутчен сӳтсе явни те кирлĕ ĕçсем патне илсе çитерме пултараймарĕç. Çавăн пек условисенче Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республики правительствисем, Корейăра мир тума тата вăрçă ĕçĕсене чарса лартма тăрăшса, тыткăна илнĕ çар çыннисем çинчен тăракан ыйтăва, çапла вара пĕтĕм Корея ыйтăвне татăклăн татса пама çĕнĕ утăм турĕç.

«Китай Халăх Республикин правительствипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви çапла сĕнеççĕ, — тенĕ Чжоу Энь-лай мартăн 30-мĕшĕнче, — калаçура икĕ енĕн те вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн çийĕнчех хăйсем аллинче тăракан тыткăнри çар çыннисене, хăйсен тăван çĕршывне таврăнма тăрăшакан мĕнпур çар çыннисене репатриацилеме килĕшмелле. Тыткăна илнĕ ытти çар çыннисене, вĕсене репатриацилесси çинчен тăракан ыйтăва тӳрĕ майпа татса пама, нейтральнăй государство аллине памалла».

Совет правительстви, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ В. М. Молотов пĕлтернĕ тăрăх, Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительстви панă сĕнӳпе пĕтĕмĕшпех килĕшни çинчен тата çак сĕнĕве пурнăçа кĕртмешкĕн пулăшма хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕ. Çак сĕнӳ Корея ыйтăвне тĕрĕс татса пама условисем туса пачĕ. Çак сĕнӳ вăрçа чарса лартма, çапла вара вăрçăран мире куçма май парать.

Перемири туни хăйсен ывăлĕсем Корейăра пĕр-пĕринпе çапăçакан халăхсен пурнăç интересĕсене те, çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери халăхсен тĕп интересĕсене те тивĕçтерет. Акă мĕншĕн ĕнтĕ вăрçа чарса лартма тата Инçет Хĕвелтухăçĕпе пĕтĕм тĕнчере мире тĕреклетессишĕн, халăхсем валли хăрушсăрлăх туса хурассишĕн кĕрешекен мĕнпур çынсем çак çĕнĕ пуçарăва, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама пулăшакан пуçарăва, пĕтĕм чĕререн хапăл туса йышăнчĕç.

Анчах фактсем çакăн çинчен калаççĕ: Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассине уççăн хирĕç тăракан çынсем кăна мар, вăрттăн хирĕç тăракан çынсем те пур. Çакна курмасăр тăни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Вĕсене Корейăра мир туни килĕшмест, çавăнпа ĕнтĕ вĕсем Корейăри вăрçа малалла тăсас тесе Корея ыйтăвне пур майсемпе те йывăрлатма тăрăшаççĕ.

Тĕслĕхрен, Америка хаçачĕсен Вашингтонри корреспонденчĕсем: Кларк генерала Корея ыйтăвне урăх ыйтусемпе, çак ыйтупа нихăш енчен те çыхăнман ыйтусемпе, сăмахран, Индо-Китай ыйтăвĕпе çыхăнтарасси çинчен инструкци панă, тесе çине тăрса хыпар сараççĕ. Çакăн пек тума хăтланни чăнахах та сисĕнет ĕнтĕ. Çакнашкал тума хăтланни тăрлавсăр ĕç пулни пуриншĕн те паллă.

Америкăри хăшпĕр хаçатсем Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парасси çинчен калаçусем ирттернĕ чухне США Кăнтăр Корея чиккине фронтăн хальхи линийĕнчен çурçĕр еннерех куçарма тăрăшĕ тесе çыраççĕ. Анчах та Америкăри официальнăй çынсемпе çывăх тăракан «Вашингтон пост» хаçат çакăн пек хăтланма пăхакан ăссăрсем пирки тĕрĕссипе тăрăхласа çапла çырать: «Тен, вĕсем çĕнĕ лини çинчен калаçса тата ытларах илесшĕн пулĕ, анчах кун пек пулсан США-на вăл çак ыйтăва йĕркелесе яма тăрăшмасть тесе айăплама çăмăл пулать».

Паллах, çакăн пек тума хăтланнисем пурте путланса ларĕç. Мир ĕçĕн уççăн тата вăрттăн тăшманĕсем те, Корейăри вăрçа чарса лартас ĕçĕн уççăн тата вăрттăн тăшманĕсем те, темĕн пек тăрăшсан та, Паньмыньчжоньра пуçланнă калаçусене чарса лартма пултараймĕç.

Кларк генерал тыткăна илнĕ чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен панă сĕнӳ пирки Ким Ир Сенпа Пын Дэ-хуэй панă ответ Паньмыньчжоньра калаçусем тепĕр хут пуçласа яма пулăшрĕ. Государство администраци совечĕн Премьерĕ Чжоу Энь-лай тыткăна илнĕ çар çыннисене репатриаци тумалли мĕнпур ыйтусене татса пама палăртнă план Корейăра перемири тăвасси çинчен тата вăрçа чарса лартасси çинчен пыракан ыйтăва çирĕп никĕс çине тăратрĕ.

Паньмыньчжоньра пыракан калаçусем çакна кăтартса параççĕ: Корея ыйтăвне тĕрĕс татса парас тĕлĕшпе малтанхи çитĕнӳсем тунă ĕнтĕ.

(«ПРАВДА», апрелĕн 11-мĕшĕнчи умстатьи).

* * *

Морис Торез Францие таврăннă

ПАРИЖ, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Франципи Коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Морис Торез паян Францие таврăннă. Вăл 1950 çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа Совет Союзĕнче сывалса пурăннă.

АНГЛИ ХАЛĂХĔ КОРЕЙĂРА МИР ТĂВАССИШĔН ТĂРАТЬ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ эрне вĕçĕнче Англире пур çĕрте те тĕрлĕ профсоюзсемпе общественăлла организацисен конференцийĕсем пулса иртрĕ. Конференцисем Англи халăхĕ Корейăра хăвăртрах мир тăвассишĕн тăрăшнине кăтартса панă.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 5-мĕшĕнче Йоркширта профсоюзсен союзĕсен федерацийĕн çулленхи пулакан конференцийĕнче (ку федераци профсоюзсен 27 советне пĕрлештерсе тăрать) резолюци йышăннă. Унта Китай Халăх Республикин правительстви тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илес тата перемири тăвасси çинчен калаçу пуçлас ыйту тăрăх тытакан позицие ырланă.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Апрелĕн 8-мĕшĕнчи пĕрлехи ларусем

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕ пулнă. Унта США тата ытти çĕршывсем сĕннĕ, Политикăлла комитет йышăннă резолюцие пăхса тухнă. Резолюцире хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси ĕçне ырланă.

Сасăлама тытăнас умĕн Совет Союзĕн представителĕ А. Я. Вышинский кĕске сăмах тухса каланă. Политикăлла комитет сĕнĕвне, тенĕ вăл, хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие ырласа каланă сăмахсене тата çак ыйту тăрăх Генеральнăй Ассамблейăн VI-мĕш сессийĕнче çак ыйтупа йышăннă резолюци çинчен асăннине хуратса пăрахас пулсан, Совет делегацийĕ йышăнма пултарать. А. Я. Вышинский Ассамблейăна çакăн пек тӳрлетӳсем кĕртме сĕннине йышăнма чĕннĕ. Çак сĕнӳсене Ассамблея йышăнас пулсан, тенĕ А. Я. Вышинский, резолюцин ытти паллăрах положенийĕсем тăрăх та килĕшӳ тума пулать.

Юлашкинчен Вышинский юлташ çапла каланă: халлĕхе татса паман ытти ыйтусем тăрăх килĕшӳ тума çул уçса паракан ыйтусем тĕлĕшпе, Совет Союзĕ вĕсемпе килĕшме пулнă пекех, ытти делегацисем те Совет делегацийĕпе килĕшессе шанса тăратăп, тенĕ. Индонези представителĕ Суджарво совет сĕнĕвĕсене ырласа çапла каланă: Генеральнăй Ассамблея çак тӳрлетӳсене йышăнас пулсан, çакă вăл аслă державăсем пĕр-пĕринпе килĕшсе татăласси патне илсе пыма пултарать. Çакăн пек туни вара пĕр-пĕрне шанса тăманнине пĕтерме тата хĕçпăшалсăрланас ыйту тăрăх чăн-чăн прогресс тума пулăшнă пулĕччĕ.

Чехословаки делегацийĕ те Совет Союзĕн делегацийĕн тӳрлетĕвĕсене ырланă.

Англи представителĕ Джебб хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие ырласа каланă сăмахсене резолюцирен кăларса пăрахма совет делегацийĕ сĕннипе килĕшнĕ. Анчах Джебб Ассамблея 1952 çулта йышăннă резолюци çинчен асăннине кăларса пăрахас тĕлĕшпе совет делегацийĕн тӳрлетĕвне йышăнман.

Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегачĕ Гросс совет делегацийĕн икĕ сĕнĕвне те йышăнман.

Украина ССР, Инди, Ливан, Аргентина тата Сири представителĕсем совет делегацийĕн тӳрлетĕвĕсене ырланă, Бразили, Перу, Австрали тата Колумби представителĕсем Англи позицийĕпе килĕшнĕ.

Ливан представителĕ Азакул çапла каланă: Совет делегацийĕн тӳрлетĕвĕсене кĕртсе резолюци йышăнни хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси ĕçĕсене чарса лартмасть; мĕншĕн тесен ун çинчен Генеральнăй Ассамблейăна пăхса тухма тăратнă резолюцин малтанхи пайĕн иккĕмĕш параграфĕнче юри асăнса хăварнă.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Генеральнăй Ассамблейăн апрелĕн 8-мĕшĕнчи кăнтăрлахи ларăвĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсем ытти государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнни çинчен Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне сӳтсе явнă.

Çак резолюци проектне сасăлас умĕн хăшпĕр делегатсем тухса каланă.

СССР представителĕ В. А. Зорин çапла каланă: Совет Союзĕн делегацийĕ Политикăлла комитетра прениссем пынă вăхăтра халĕ сӳтсе явакан ыйту тăрăх хăйĕн шухăшне пĕтĕмпех каласа пачĕ, СССР делегацийĕ хăйĕн позицине тепĕр хут çирĕплетсе калать. Совет делегацийĕ Генеральнăй Ассамблейăна çакăн çинчен асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлать: Пĕрлешӳллĕ Штатсем çар соединенийĕсем, диверсиллĕ тата террористла бандăсем тума ытти государствăсен гражданĕсене пухасси çинчен 1951 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче тата 1952 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче законсем йышăнни ытти государствăсен шалти ĕçĕсене сăмсăррăн хутшăнни пулса тăрать, вăл тата тĕнчери правăпа ООН Уставĕн тĕп положенийĕсене хирĕç пырать.

Çавăнпа совет делегацийĕ, тенĕ В. А. Зорин, Чехословаки республикин делегацийĕ çак ыйту тăрăх тăратнă резолюци проектне йышăнать тата, паллах ĕнтĕ, çак проектшăн сасăлать.

США представителĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсем СССР, Китай Халăх Республики тата ытти халăх демократи çĕршывĕсен шалти ĕçĕсене хутшăнни çинчен калакан фактсене тунма хăтланнă, вăл Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне хирĕç сасăласси çинчен пĕлтернĕ.

Гватемалăпа Аргентина представителĕсем Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне сасăланă чухне сасăлама тытăнса тăрасси çинчен каланă. Анчах, çак вăхăтрах, вĕсем хăйсен правительствисем пĕр çĕршывсем тепĕр çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнма кирлĕ марри çинчен калакан принципа пур майсемпе те ырлани çинчен каланă.

Польша представителĕ Кац-Сухи Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне ырланă. Çакăн хыççăн резолюци проектне сасăлама тытăннă. СССР, Чехословаки, УССР, БССР, Польша представителĕсем Чехословаки резолюцийĕн проекчĕшĕн сасăланă. 14 çĕршыв представителĕсем (пуринчен ытла араб çĕршывĕсемпе Ази çĕршывĕн представителĕсем, Гватемалăпа Аргентина представителĕсем) нихăш майлă та сасăламан. 40 çĕршыв делегачĕсем, вăл шутра США, Англи, Франци делегачĕсем çак резолюци проектне хирĕç сасăланă. Çавăн пирки те Чехословаки делегацийĕ тăратнă резолюци проектне йышăнман.

Çакăнпа Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕ хупăннă.

Политикăлла комитетра

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăлла комитетăн апрелĕн 8-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче «ООН хĕçпăшаллă вăйĕсене бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнăшăн айăпланине тӳрĕ кăмăлпа тĕрĕслесе тухасси çинчен» ятлă ыйтăва сӳтсе явса пĕтернĕ. США, Англи, Филиппин, Израиль тата ытти хăшпĕр çĕршывсен представителĕсем США-па ытти çĕршывсен делегацийĕсем США хĕçпăшаллă вăйĕсене Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнăшăн айăпланине тĕрĕслесе тухма пилĕк государство представителĕсенчен комисси тăвасси çинчен тăратнă резолюци проектне хӳтĕлесе каланă.

Польша представителĕ Кац-Сухи Америка командованийĕ Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине никам сирсе яма пултарайман нумай фактсем илсе кăтартнă, ученăйсем тата Америка офицерĕсем каласа панисем çинчен аса илтернĕ. Кац-Сухи Политикăлла комитет çак ыйтăва тӳрĕ кăмăлпа сӳтсе явма пултарайман, тенĕ, мĕншĕн тесен комитет членĕсен ытларахăшĕ комитет ларăвне Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин представителĕсене чĕнесси çинчен Совет делегацийĕ панă сĕнӳпе килĕшмерĕ. Кац-Сухи çавăн пекех тата пилĕк çĕршыв представителĕсенчен уйăрса тăвакан комисси те тӳрĕ шухăшпа ĕçлеме пултараймасть, тенĕ, мĕншĕн тесен кунта тăратнă резолюцире комисси умне малтанах США-на айăпланине сирсе ямалла тăвас задача кăларса тăратнă.

Индонези представителĕ çакна палăртнă: Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствисене законлă тесе йышăнмасăр, комисси ăнăçлă ĕçлеме пултараймасть, тенĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, çакăн пек комисси туни вырăнсăр пулать, Индонези делегацийĕ çак резолюци проектне сасăланă чухне сасăлама тытăнса тăрĕ, тенĕ вăл. Индонези представителĕ çакăнпа пĕрлех Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин представителĕсем çак ыйту тăрăх мĕнле шутлани çинчен итлеме комитет килĕшменнине палăртнă.

Сасăланă чухне комитет членĕсен ытларахăшĕ США-па ытти çĕршывсен делегацийĕсем пилĕк государство представителĕсенчен комисси тăвасси çинчен тăратнă резолюци проектне йышăннă. СССР, УССР, БССР, Польша тата Чехословаки делегацийĕсем çак резолюци проектне хирĕç сасăланă. Инди, Индонези, Бирма представителĕсем нихăш майлă та сасăламан.

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 9-мĕшĕнчи ирхи ларура Политикăлла комитет «Çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярасси çинчен тата мире тĕреклетесси, халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен» Польша делегацийĕ тăратнă сĕнĕве пăхса тухма тытăннă.

Хальхи вăхăтри тĕнчери лару-тăрура Корея ыйтăвне ООН енчен мирлĕ майпа татса пама тăрăшни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ Польша представителĕ Скшешевский. Правительствăсем Корея ыйтăвĕ çине мĕнле пăхни тăрăх тĕнчери халăхсем çак правительствăсем пĕтĕм тĕнчере мир туса хурас тĕлĕшпе мĕнле позици тытнине хаклаççĕ.

Польша тăратнă резолюци проекчĕн иккĕмĕш пайĕ, тенĕ Скшешевский, хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене çулталăк хушшинче виçĕ пайран пĕр пайне чакарас тата атомлă хĕçпăшала нимĕн хирĕçсе тăмасăр халех чарса лартмалла тăвас тĕлĕшпе Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи членĕсен килĕшӳ тумалли çинчен калать. Резолюци проекчĕн виççĕмĕш пайĕ çинчен ăнлантарса парса, Скшешевский пур ыйтусене те калаçса татăлнипе татса пама пулать, тенĕ. Резолюци проекчĕн виççĕмĕш пайĕ пилĕк держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвасси çинчен калать.

Юлашкинчен Совет Союзĕн представителĕ А. Я. Вышинский тухса каланă. Вăл Польша делегацийĕн сĕнĕвне ырланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем Пенамдон районĕнче оборонăра тăрса хаяррăн çапăçнă. Тăшманăн пĕр полкĕ, 30 ытла самолет тата 10 танк ытла хӳтĕлесе тăнипе, Пенамдонран хĕвеланăçнерехри сăртсем çине темиçе хутчен хаяррăн тапăннă, Анчах та Халăх çарĕ тăшмана пысăк çухату кӳнĕ. Пур атакăсене те ăнăçлăн сирсе пăрахнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чăçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чăçĕсем Англипе Америка интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç Пенамдон районĕнче оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америка самолечĕсем Пхеньянпа Нампхо хулисенчи мирлĕ халăх пурăнакан кварталсем çине çĕнĕрен тапăннă, бомбăсем нумай пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисем нумай, çуртсемпе землянкăсем чылай ишĕлнĕ.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Паньмыньчжоньри калаçусем

ПЕКИН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тăрăх, Корейăпа Китай делегацийĕ коммюнике пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Паян ирхине 11 сехетре Паньмыньчжоньра икĕ енĕн çыхăну ушкăнĕсен тăваттăмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларура Корейăпа Китай енĕн çыхăну ушкăнĕн пуçлăхĕ генерал Ли Сан Чо тепĕр енĕ апрелĕн 6-мĕшĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен сĕннĕ килĕшӳ проекчĕн пăхса тухнă текстне тăратнă. Пăхса тухнă текста тĕпчесе пĕлнĕ хыççăн тепĕр енĕ: ку ыйту тăрăх пирĕн хирĕçӳсем çук пулмалла, тесе пĕлтернĕ. Тепĕр енĕ пăхса тухнă проект текстĕ тăрăх хăшпĕр конкретлă асăрхаттарусем çинчен каласа панă. Корейăпа Китай енĕ вăл асăрхаттарусене, пĕтĕмĕшпе илсен, йышăнма юрăхлă çинчен пĕлтернĕ.

Çыхăну ушкăнĕсен пиллĕкмĕш ларăвĕ апрелĕн 10-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пуçланать.

Çыхăну ушкăнĕсен штаб офицерĕсен апрелĕн 9-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен пулнă иккĕмĕш ларăвĕнче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илессипе çыхăнса тăракан конкретлă ĕçсем çинчен сӳтсе явнă. Çавăн пекех тата офицерсене Паньмыньчжонь зонинче тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене йышăнма центрсем тума вырăн палăртма янă.

ПАРИЖ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчĕ Мунсаньран çапла пĕлтерет: тыткăнри çар çыннисене улăштарса илесси çинчен Паньмыньчжоньра пынă калаçусем килĕшӳ патне илсе çитернĕ. Америкăн çыхăну ушкăнне ертсе пыракан контр-адмирал Даниэль çапла каланă: ыран, тен, тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илесси çинчен килĕшӳ çине татăклăнах алă пусатпăр пулмалла. Даниэль калаçусем вăхăтĕнче икĕ енĕ те ыйтăва хăвăртрах татса пама тăрăшнине кăтартса панă.

АВСТРИЕ ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН ÇАПĂÇСА ВИЛНĔ СОВЕТ ВОИНĔСЕН ЯТНЕ ХИСЕПЛЕÇÇĔ

ВЕНА, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Австри столицинчи ĕççыннисем Вена хулине тата Австрие Гитлер пусмăрĕнчен ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ совет салтакĕсемпе офицерĕсен ятне асра тытса хисеплеççĕ.

Вена хулине тата Австрие ирĕке кăларнăранпа çак кунсенче 8 çул тултарать. Çавна май çĕршыври тĕрлĕ хуласенче ĕççыннисен пухăвĕсемпе митингĕсем пулса иртеççĕ. Ĕççыннисем Совет Çарĕн воинĕсен вилтăприсем çине чечек кăшăлĕсем хураççĕ.

Вена хулин иккĕмĕш тата вуннăмĕш районĕсенче Совет воинĕсен вилтăприсем çине Австрири Коммунистсен партийĕнчен, демократиллĕ организацисенчен, пысăк заводсенчи коллективсенчен чечек кăшăлĕсем хунă.

Хурлăхлă митингсенче тухса каланă чухне Австрири общественность представителĕсем Европăна, вăл шутра Австрие гитлеризмран ирĕке кăларас ĕçре Совет Çарĕ тĕп вырăн йышăнса тăнине палăртаççĕ. Австрири тӳрĕ шухăшлă çынсем, теççĕ вĕсем, Вена хулине тата ытти хуласене ирĕке кăларассишĕн çапăçса вилнĕ совет воинĕсен паттăрлăхне нихçан та манас çук.

ГВАТЕМАЛА ЦЕНТРАЛЬНĂЙ АМЕРИКĂРИ ÇĔРШЫВСЕН ОРГАНИЗАЦИЙĔНЧЕН ТУХНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Гватемала ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Рауль Осеседа апрелĕн 7-мĕшĕнче çапла каласа панă: Гватемала правительстви Сальвадор, Коста-Рика, Никарагуа тата Гондурас правительствисене хăй Центральнăй Америка çĕршывĕсен организацийĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. Гватемалăн шалти ĕçĕсене ют çĕршыв хутшăннă пирки çак организацирен тухмалла пулчĕ, тенĕ Рауль Осеседа.



Приморье крайĕ. Красноармейски МТС комбайнерĕ И. Т. Трофимов — тигр тытакан ăста сунарçă. Вăл 20 тигр тытнă. Унăн бригади кăçал, чике хут тайгана кайса, ултă çамрăк тигр тытса килнĕ. Юлашки вăхăтра тытнă тигр çурисене Сихотэ-Алинь сăрчĕ патĕнчи тайгара Тудо-Вака юханшывĕ патĕнче тытнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: тигр тытаççĕ. И. Т. Трофимов (сылтăмри) тигр урисене вĕренпе çыхать. Ытти сунарçăсем тигра тăма памаççĕ.

Н. НАЗАРОВ фотоӳкерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

Йывăç юхтарма тытăннă

УЛАТĂР, апрелĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Пĕчĕк юханшывсем пăртан тасалчĕç. Ку кунсенче Сăр çине юхса кĕрекен Шурă Пасна, Хура Пасна, Ор Пасна тата Упамса çинче хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать: вăрманпромхозсем тата Улатăрти сулă юхтаракан кантур кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра хатĕрленĕ йывăçа юханшывсем тăрăх юхтарма тытăнчĕç. Апрелĕн 11-мĕшĕ тĕлне шыва 15 пин кубометр ытла пĕрене пăрахнă.

Çак çуркунне Улатăрти сулă юхтаракан кантурăн пурĕ 153 пин кубометр йывăç сулăпа юхтармалла, вăл шутра 106 пин кубометрне пĕчĕк юханшывсем тăрăх пĕрерĕн-пĕрерĕн юхтарса Сăр çине кăлармалла. Пĕчĕк юханшывсем çинче шыв 8—10 кун хушши кăна тулли пулать, çавăнпа кашни кунпа, кашни сехетпе туллин усă курма тăрăшас пулать. Пĕренесене шыва ярса ĕлкĕреймесен вĕсем тепĕр çуркуннеччченех çыран хĕрринче выртса юлма пултараççĕ. Вăрманпромхозсен тата сулă юхтаракан кантурăн механизмсене кунĕн-çĕрĕн ĕçлеттермелле, рабочисем валли тухăçлă ĕçлеме паха майсем туса памалла, социализмла ăмăртăва анлăн сармалла.

Сулă юхтаракан кантур кадрти рабочисемпе çак пысăк ĕçе ăнăçлă пурнăçлама пултараймасть. Çавна шута илсе, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ сулă юхтарма колхозниксене хутшăнтарма йышăннă. Улатăр, Канаш, Шăхасан тата Куславкка районĕсенчи колхозсен асăннă кантура 700 çын уйăрса памалла. Ку районсенчи райсовет исполкомĕсен председателĕсем, колхоз руководителĕсем ĕç вăйĕ уйăрса парасси çине тимлĕн пăхмаççĕ. Улатăр районĕнчи колхозсем 300 çын вырăнне 85 çын, Канаш районĕнчи колхозсем 200 çын вырăнне 24 çын, Шăхасанпа Куславкка районĕсенчи колхозсем 100-шер çын вырăнне 18—27 çын çеç уйăрса янă.

Ĕç вăйĕ çитменни государствăн ответлă заданине пурнăçлас ĕçре пысăк чăрмав кӳме пултарать. Асăннă районсенчи партипе совет тата колхоз руководителĕсен сулă юхтарма ĕç вăйĕ кирлĕ чухлĕ паян-ыранах уйăрса ямалла.

Атăл çинче

Атăл шывĕ хăвăрт хушăнса пырать. Юлашки икĕ талăк хушшинче Шупашкар тĕлĕнче 84 сантиметр, кăçал пурĕ 3 метр та 38 сантиметр хушăннă.

Пăрпа çыран хĕрринчи шыв сарăлсах пырать. Атăл урлă çӳрекенсем кимĕсемпе каçса пăр çине тухаççĕ. Шупашкар пристанĕн флотне Чебоксаркăна илсе кĕнĕ.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче, кăнтăрла 12 сехетре, Хусан тĕлĕнче Атăл пăрĕ тапраннă.

Сăр çинче Улатăрпа Етĕрне хушшинче талкăшпех пăр юхать.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине вырăсла спектакль **«Твое личное дело»**. Апрелĕн 13-мĕшĕнче каçхине вырăсла спектакль **«Невольницы»**. Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи спектакль 20 сехетре пуçланать.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 12-мĕшĕнче **«Всадник, скачущий впереди»**. Спектакль «Электрик» клубĕнче пулать, ирхине 10 сехетре пуçланать.

КИНО

«РОДИНА» — апрелĕн 12—мĕшĕнче 10, 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Щедрое лето»**; 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Анна Каренина»** (иккĕмĕш серi).

«УДАРНИК» — апрелĕн 12-мĕшĕнче **«Восточная сказка»**.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01070 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.